84.09(=Чув)
Т 19
Ч-444



## Валентина Тарават

# Ӗмӗтсем

Национальная библиотека ЧР
4-044422

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

К 84.09(=Чув)
Т19

Валентина Тарават

# Ĕмĕтсем

**Сăвăсем**



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2012

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-5
Т 19

**Таравáт В.Н.**
Т 19 Ěмěтсем: Сăвăсем / В.Н. Игнатьева. — Шупашкар: Чăваш кěнеке изд-ви, 2012. — 207 с.
ISBN 978-5-7670-1874-1

Кěнекене В. Тарават тěрлě çулсенче çырнă сăвăсем кěнě. Вěрентсе каласа йăлăхтармасăрах вулакана çак шухăш патне илсе пыраççě вěсем: пурнăçăн кирек хăш пăрăнăçне пырса тухсан та çынлăхна ан çухат. Туслăхпа юрату çинчен шăрçалана сăввисенчен нумайăшě юрă пулса тăнă.

**УДК 821.512.111**
**ББК 84(2Рос=Чув) 6-5**

**ISBN 978-5-7670-1874-1**
© Тарават В.Н., 2012
© Чăваш кěнеке издательствви, 2012

Национальная библиотека Чувашской Республики

Проверено 13 СЕН 2017

## Шăнкăртататать çăлкуç

Асăрханă-и эсир: тăван кĕтес, çуралнă ял, ачалăх, атте-анне çинчен шухăшланă вăхăтра таçтан çăлкуç сасси илтĕнсе каять. Аякри шăнкăрав пек янăрать унăн кĕвви. Шăнкăр та шăнкăр, шăнкăр та шăнкăр шăнкăртататать вăл тунсăхлă чун варринче. Тӳпери тăри сасси пек те туйăнса каять çав асамлă çемĕ, сĕрме купăс хĕлĕхĕ пулса та ăш-чике хускатать. Вара эпир хамăр сисмесĕрех тата тарăнрах шухăша путатпăр: ăçта эсĕ, пире ĕлĕкхиллех хăвăн патна йыхăракан, кунĕн те çĕрĕн чĕнекен сенкер тĕнче? Кăларса пăрахман-и эсĕ ачусене хăвăн ытарми ытамунтан? Çук иккен-ха, атте-аннемĕрĕн пехиллĕ халалĕ те чĕре варринчех, çуралнă ялта йăмра çулçă кăларнă, урамра симĕс курăк шăтнă ырă вăхăтри сипетлĕ шăршă та асрах, вак чул çийĕн шурă çилхине тăратса малалла вирхĕнекен тăрă çăлкуç шывĕ те куç умĕнчех. Эппин, мухтав Турра, пурăнатпăр-ха — умри çула çухатман, ятăмăр-чысăмăра алăран вĕçертмен, тăван чăваш сăмахне çĕре ӳкермен...

Çакăн пек шухăшсем пырса кĕчĕç пуçа Валентина Тарават çыравçăмăрăн ал çырăвне вуласа тухнă хыççăн.

Сăмах ăсти Тутарстан Республикинчи Çĕпрел районĕнчи чăваш хутлăхĕнче — Турхан Упи ятлă ялта çуралнă. Вырăнĕ ку питĕ паллă: кунта чăваш литературинче курăмлă йĕр хăварнă Георгий Тал-Мăрса, Александр Кăлкан çырав-

çăсем вĕреннĕ, СССР авиаци промышленноçĕн министрĕ икĕ хут Социализмлă Ĕç Геройĕ Петр Дементьев генерал-полковник, çавăн пекех Сергей Немасевпа Лазарь Дергунов ĕç паттăрĕсем çуралса ӳснĕ, вĕсен ырă тĕслĕхĕ паянхи кун та таврари пĕтĕм халăха хавхалану кӳрсе тăрать.

Çакна та каласа хăвармалла: ку тăрăхри çынсем вырăсла та, тутарла та, чăвашла та ирĕклĕнех калаçаççĕ, виçĕ чĕлхе пуянлăхне ачаранпах ăса хывса ӳсеççĕ, тĕрлĕ халăх хушшинче тусюлташ тупаççĕ. Ку, паллах, пĕтĕмĕшле тавракурăма анлăлатать, аталану шайне ӳстерет. Калăпăр, тутарсен Çĕпрел хутлăхĕнчен тухнă çыравçисем Шараф Мударриспа Заки Нури чăвашла лайăх калаçатчĕç, вĕсенчен пĕрремĕшĕ вара Константин Ивановăн «Нарспине» тутарла питĕ ăста куçарнăччĕ, çав куçару икĕ кăларăмпа пичетленсе тухнă. Унсăр пуçне Шарафпа Заки пиччемĕрсен хăйсен кĕнекисене те чăвашла куçарса кăларнăччĕ, вĕсене питĕ килĕштерсе вулаттăмăр хăй вăхăтĕнче. Акă мĕнле туслă çыхăнура тăнă халăхăмăрсем. Чăнах та, виçĕ чĕлхе — виçĕ ăс, виçĕ культура. Çак уйрăмлăх Валентина Тараватăн эпир халĕ алла тытнă çĕнĕ кĕнекинче палăрса тăрать: унта вырăспа тутар поэзийĕсен ырă витĕмĕ те, чăваш халăх пултарулăхĕн сипетлĕ сĕмĕ те пур паллах. Çак пуянлăх кашниннех çук. Каласа хăварма питĕ кăмăллă: сăвăçăмăр вырăсла та, чăвашла та пĕр пекех лайăх çырать, тутарларан та тӳрех куçарать. Çавăнпа та вăл çырнă хайлавсемшĕн Мускавра та, Самарта та, Хусанпа Шупашкара та яланах çул уçă.

Чăнах та ĕнтĕ, Валентина Николаевна пултарулăхĕ нумай регистрлă аккордеонпа пĕрех:

литература жанрĕсем те, юрă-ташă ӳнерĕ те, эстрада тĕсĕсем те уншăн пурте çывăх та хаклă. Çын кăмăл-туйăмĕн курăмлă самантне е пĕрпĕр характер уйрăмлăхне хăй суйласа илнĕ тăрăх е сăвăпа, е юрăпа, е калав урлă сăнласа кăтартма питĕ витĕмлĕ мелсемпе меслетсем тупать вăл, кашнинчех асра юлмалли сăнарсем тăвать. Çавăнпа та Валентина Тарават хайлавĕсене ачасем те, çитĕннисем те яланах тулли кăмăлпа йышăнаççĕ, вĕсенче чун ыйтăвне тивĕçтерекен хуравсем тупаççĕ. Каланă сăмаха çирĕплетме пĕр тĕслĕх илсе кăтартни те çителĕклĕ пулассӑн туйăнать. Сăвăçăн «Кавир чĕртетĕп чечекрен» ятлă сăвă пур. Каланă виçĕ сăмаха кăна тĕшĕлесе пăхсан та эпир автор ăсталăхне пĕтĕмлетме май паракан тĕслĕхсене тӳрех асăрхатпăр. Сăвă ятне вуланипех пирĕн ума пултарулла, ĕçре яланах çĕннине шыракан, пысăк тĕллевпе пурăнакан ылтăн алăллă, çаврăнăçуллă та илĕртӳллĕ хĕр сăнарĕ тухса тăрать. Çапла мар-и? Тата яланах ырă хавхаланупа пурăнать-ха вăл: хальхинче те авă çĕршер тĕслĕ чечекрен хитре кавир тĕртсе тăван тавралăх пуянлăхне те илемне çĕнĕ эрешпе уçса парасшăн, пире савăнтарасшăн. Кунта, кирек мĕн калăр та, çепĕçлĕх те, эреветлĕх-теветлĕх те, таса юрату та — пурте пур. Ку хăех — лайăх сăвă та, чуна тыткăнлакан юрă та. Ахальтен мар ăна чăваш халăхĕн чи сумлă юрăçисем хăйсен репертуарне кĕртеççĕ. Акă ăçта вăл сăмах ăсталăхĕпе, ӳнер асамлăхĕпе туллин усă курса тĕлĕнтермĕш шăратса кăларма пултарнин тĕсĕ. Мĕнле-ши çав вăрттăнлăхăн ячĕ? Унăн ячĕ вăл — талант. Талант тени этем чунĕнче мĕн ачаранпах хĕмленсе çӳрет, анчах ăна аталанма, çунатланса çын çине тухма хăй сехечĕ,

хӑй мехелӗ кирлӗ. Ҫав мехел Валентина Николаевнӑсен кил-йышӗнче кулленхи сывлӑш пекех тӗпленнӗ пулас. Курӑр-ха эсир: унӑн шӑллӗ те, Анатолий Музыкантов, эпир лайӑх пӗлекен, сума сӑвакан ташӑ ӑрӑмҫи, Шупашкарта «Сувар» ансамбль йӗркелесе чӑваш таш-шине тӗнче умне кӑларчӗ. Валентина хӑй те, унӑн шӑллӗ Анатолий те Раҫҫей Федерацийӗн культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗсем. Пӗр вучахра шӑраннӑ вӗсем, пӗр сунтал ҫинче туптаннӑ, ырми-канми ӑнтӑлупа пурнӑҫ ҫулӗ хывнӑ, Парнас тӑвӗ ҫине улӑхнӑ. Ӗнтӗ ҫырлахмалла та пек: хӑпарса ҫав ҫӳллӗше ҫитнине ҫӗр те курать, тӳпе те пӗлет, апла пулин те малаллах талпӑнаҫҫӗ пӗртӑвансем. Ҫывӑхрах пек ӗнтӗ Парнас тӑрри, анчах та вӑл, тем чухлӗ хӑпарсан та, тӗнче уҫлӑхӗн сенкер тӗтрелӗхӗнче ҫухалать. Хӑпарса ҫитме ҫук. Ивановпа Ҫеҫпӗлшӗн те, Хусанкайпа Ухсайшӑн та, Лукинпа Хирпӳшӗн те ҫаплах пулнӑ унӑн саккунӗ. Ахӑртнех, хальхи саманари талантсемшӗн те ҫавах. Мал ӗмӗтлисем вара пурпӗрех малаллах туртӑнаҫҫӗ. Вӗсемшӗн пултару ҫулӗн вӗҫӗ ҫук.

Аялта вара — тӑван ҫӑлкуҫ шӑнкӑртатать. Хамӑр ялӑн сӑваплӑ ҫӑлкуҫӗ.

*Юрий СЕМЕНТЕР*

# Сенкер инҫет



Чун-чĕре туртать,
Сакăл ут юртать...
Ав сенкер инçет
Ялкăшса çиçет...

Сăввăм — чăн çунат,
Кĕввĕм — чăн хăват.
Юррăм — чун хевти,
Пултăр кун çути.

Туякан — сисет.
Ыр сунан — кĕтет.
...Ав сенкер инçет
Ялкăшса çиçет.

## Хам çулпах

Утас килет-çке хам çулпах
Вăл такăр, тӳрĕ пулмасан та.
Чечек çех мар, пиçен, хупах
Ик енĕпе алне тăссан та.

Утас килет-çке хам çулпах
Çумрах таси, яки пулсан та.
Çемçе пушмакăм кантăрах —
Ашса тухмашкăн кирлĕ атă.

Утап, чупап эп хам çулпах.
Шанни, кĕтни — хăй чăн маяк-çке.
Кахал çынна лекмест çăмах,
Сĕтел вăл юмахра çеç янтă...

Телейшĕн кирлĕ кĕрешме,
Анчах йĕри-тавра — хӳме...

— Турăран мĕн ыйтни йăлт пулсассăн
Мĕн-ши ыйтăн унран йăлăнса?
— Сăхсăхса эпĕ сывлăттăм ассăн:
«Тăнăç пар пур çынна та савса.

Йӳçĕк кăмăл кăштах пылаклантăр,
Тĕксĕм сăн çуталайтăр пăртак.
Кӳршине кӳршĕ ан такăнтартăр,
Никама та ан ертĕр амак...

«Куккукран» çăмăлттайлăхне сиртĕр:
Ан пăрахтăр тăван ачине.
Çӳлти Турă курать-çке йăлт витĕр
Халăх савăнăçне, нушине...»

Чăн-чăнах тархаслас тăк — ăнланĕ.
Тăнăç анĕ. Ман халăхăм канĕ...

Эп сăвăç кăна мар,
Хĕрарăм эп, анне-çке.
Хам чунăм апатне сĕнеймĕп
çемьене.
Кил-çурт пулин таса,
Чĕлхем пулин те çепĕç,
Çемье кĕтет вăй-халлăх
Тутлă апатне.

Эппин, эп шуçăма
Пирвай сунам-и сывлăх?
Çӳрем-и чĕрне вĕççĕн,
Çемье ман кантăрах.
Кил-йышăм йăл кулсан
Телей çӳрет-çке сывăх,
Кĕттермĕ сăвă-юрă
Таçта çĕтсе вăрах.

## Асаилӳ

Паян ăçта кăна пулман-ши,
Кампа кăна эп тĕл пулман.
Çăтмах та алăк уçрĕ маншăн,
Сивлеккĕн кĕтрĕ сĕм вăрман...

Ачалăх сăпкинче килентĕм.
Чуна ай-яй аван кунта!
Çынсем вара япшар, илемлĕ.
Çук кулянма нимле сăлтав.

Çамрăклăхра ăс-тăн туптарăм,
Çине тăрса телей шырарăм.
Çитсе кĕрсен сĕм вăрмана
Хĕвел кăтартрĕ çул мана...

Вăтамлăхра ларса шутларăм:
Мĕнле анне эп, мĕнле арăм?
Анчах пĕрмай хама ятларăм:
«Куçна уçсам. Мĕн чуль сан парăм!»

Хама эп аякран сăнарăм:
Çутах-ши, тĕксĕм-ши сăнарăм?
Анчах мĕнле пулсассăн та
Пур кунăмшăн, ыр Туррăм, тав.

Камран-ши çут хĕвел именчĕ?
Лăпкатчĕ халь анчах куçа.
Самант — тӳпемĕр тĕксĕмленчĕ,
Сапать, сапать вăл шур пăрçа.

Ирпе шутланă ĕç путланчĕ.
Пур тăрăшу та — харама.
Хам! хам! вĕрсе вăрçать
ав анчăк.
— Эс мар! Пур айăп та — хамра.
Кам чарнă çанă тавăрма?!

Ай-яй! Тӳпен пăрçи нумай-çке!
Сапса тултарчĕ лăк тулли.
Тӳпе миххи пушаннă майăн
Умра çиçет хĕвел кулли.

Çынпа çанталăк пĕрешкел пек:
Йĕреç, кулаç кĕтмен çĕртен.
...Пуçланă ĕçĕмсем кĕтеççĕ,
Пĕри васкавлă тепринчен.

## Эп шутлатăп...

Ватăлатăп-ши е ăсланатăп —
Килĕшменлĕх ӳсет чунăмра.
Шуррăн курнă — сархайнăн куратăп.
Тĕксĕмми — халь çап-çутă умра.

Те хытатăп тесе те шутлатăп,
Те вĕрентĕм кăштах тирпее.
Темиçе хут виççен çех касатăп,
Шел, виçмешкĕн май çук телее...

Эп шутлатăп, шутлатăп, шутлатăп...
Эп виçетĕп, виçетĕп çич хут.
Анчах мĕншĕн пĕрмай такăнатăп?
Тăванпа танлашмасть пуль çав ют.

## Чирленӗ вӑхӑтра

Ывӑҫ-ывӑҫ им-ҫам эп ӗҫетӗп,
Ӑшӑ ванна, укол, пыллӑ чей.
Ӗҫӗмсем черетре ретӗн-ретӗн...
Кахала пемелле хӑҫанччен?

Чунӑма ачашлать-ҫке кахаллӑх:
«Лӑплансам. Манпа чух канлӗрех.
Вӑхӑт пур тем чухлех ҫывӑрмалӑх,
Кӳршӗпе калаҫма — тем чухлех.

Упӑшку ав ҫӑвать чашӑк-тирӗк,
Ывӑлу кил-ҫурта тирпейлет.
Пурнӑҫ мар, чӑн ҫӑтмах халӗ пирӗн.
Ак часах чӑн-чӑн пурнӑҫ килет».

Эх, лӑпкать вӑл чуна! Эх, лӑпкать!..
Хӑй мана шеллемесӗр пӑвать...

Çил пек вĕçетĕп пур çĕрте.
Кирлех пулсан — вакка сикетĕп...
Канап ирпе, ĕçлеп çĕрле.
Мĕн пуласса чунпа сисетĕп.

Чăрмавлăх мар мана çăра,
Хупса хумашкăн шутласан та.
Татма пултарăп сăнчăра,
Хăш чух çиппе татаймасан та...
Анчах...
Асрах кил-йыш сасси.
Вăл — чи пахи, вăл — чи асли.

Чаранми шĕпĕлтетеççĕ
Çамрăк çăкасем.
Мĕн çинчен ĕмĕтленеççĕ?
Мĕн пуплеç вĕсем?

Пуçăма тайса итлетĕп
Çак калаçăва.
Иртнине аса илетĕп
Эп. Пурнăçăма...

Пăшăл пăтти çитеретĕп
Эп çăкасене.
Шухăш çăмхине сӳтетĕп...
Пĕлччĕр пулнине.

Чĕрере вĕсем упраччăр
Халь мĕн илтнине.
Ывăнсассăн — пачах манччăр
Вăрттăнлăхсене...

И-44422
Национальная библиотека
Чувашской Республики

## Сутмĕ никама

Çут çанталăк! Иксĕлми эмел эс,
Пĕр санпа сиплетĕп эп хама.
...Ешĕл рашчана чуна уçам-и?
Лăпкăн итлĕ, сутмĕ никама.

Ирсĕрсем тураттине хуçсан та
Шăппăн çеç шăлать вăл куççульне.
Ăнланать çынна темле пулсан та,
Йыхăрать сăпайлăн ытамне.

Кайăк-кĕшĕк çавăнпах иленнĕ.
Юрăпа телейлĕ çак çăтмах.
Чун ăшши пуртан рашча илемлĕ.
Пархатарлăхне çын куртăрах.

Çурхи куна мĕскер çитет?
Темле асамлăх пур унра.
Çурхи хĕвел анчах сиплет
Пур сурана. Юлать чунра.

Çурхи куна мĕскер çитет?
Унра мĕн чул сӳнми хăват!
Вăл, ырă çын пек, тарават,
Çĕклем-çĕклем илем сĕнет.

Çĕклем-çĕклем илем сĕнет,
Сĕнет телей те юрату.
Пĕр эс пуртан кун-çул тату,
Ыр çуркунне! Пур çын пĕлет.

Куллу пĕр пек пур çыншăн та.
Сана — мухтав та пысăк тав!

Хур кайӑксем кӑнтӑралла
хускалчӗҫ,
Салхуллӑн сывпуллашрӗҫ
пирӗнпе.
Ӗнер анчах ҫут кӳлӗ пек
тасаччӗ,
Паян йӗрет тӳпемӗр
куҫҫульпех.
Шупкалнӑ ялӑм тинкерет
хурланнӑн,
Сивлек ҫанталӑк килешмест ӑна.
Кӗркуннере, тен, ытларах-и
шанчӑк —
Ҫӗн ҫемьесем чӑмӑртанаҫ кӑна!
Кӗрхи пуянлӑх —
чун хавалӗн пайӗ,
Унпа пӗрле телей те кӗтӗрех.
Ҫут туйӑма кичемлӗх те
хуплаймӗ,
Телей ҫӑмхийӗ кустӑр ӗмӗрех.
Сӗтелӗ пултӑр апатпа тулли,
Янратӑр уҫҫӑн ачапча кулли.

## Канлĕх

Шăп килте.
Телефон шавламасть.
Алăка та никам шаккамасть.
Мĕн амакĕ?

Вăй вылятчĕ юнра халь анчах.
Алăсем ĕç тытмаççĕ пачах.
Мăкалать пек ăс-хакăл.

Канлĕх кĕтрĕм.
Халь канлĕх — пĕр лав.
Çырăнмасть калăпланă калав.

Килĕрсемĕр.
Пурне те эп хапăл.

## Шанăр

Ан кӳлешĕр!
Кӳлешӳ çынна таптать.
Ан кӳлешĕр!
Кӳлешӳ çынна ватать.
Ан кӳлешĕр!
Кӳлешӳ телей тăшманĕ.
Шанăр! Шанăр!
Шанăçра çеç чунăр канĕ.

Шанăр! Шанăр!
Чунăра хавассăн уçăр.
Шанăр! Шанăр!
Телейпе çуталтăр куçăр.
Шанăр! Шанăр!
Шанăçра — умри пуласлăх.
Шанăр! Шанăр!
Шанăç — тĕнче евĕр аслă...

Чечек курсассăн —
Чун кĕвве кĕтет.
Килсессĕн кĕвĕ —
Чун ташша сĕвет.

Вĕçевлĕ — шухăш,
Кăмăлăм — сипет.
Вăл пур çынна та
Çут кун-çул пиллет.

Танлаштартăм çăлтăрпа,
Çунаймарăн — сÿнтĕн.
Танлаштартăм хĕвелпе,
Ăшăтмарăн — кÿнтĕм*.

Пултăн уйăх —
Сивĕ каç.
Юлташ мар эс.
Пуш хутаç...

* Кÿнтĕм — çырлахрăм.

Таçта çĕтсе çӳренĕ пуль çулсем...
Таçта, тен, такама çитернĕ пулĕ.
Пулни-иртни асрах иккен вĕсен —
Санаваскатнă ахрăма пĕр çулĕ.

Тĕлпулăва кĕтменччĕ эпĕ вуç.
Асра тытманччĕ, тĕлĕкре курманччĕ.
Чăр-р пăхрĕ ман çине ик çăлтăр куç.
Чăр-р пăхрĕ те —
чăл-пар ман канăç ванчĕ.

## Ниме тăман сăмах

Ниме тăман сăмах
Ниме тăман çынран.
Ларать пыра çăмах,
Ак ишĕлет çыран...
Пĕр шутлами чăман.
Эс халĕ — тинĕсре...
Тухатăн ал парсан.
Йĕри-тавра — тĕтре...
Ниме тăман çынран
Ниме тăман сăмах
Вăй илчĕ халăхра.
Эс халь чунпа чăлах.
Тимлетĕн кăлăхах,
Çунатăн уссăрах:
Ниме тăман сăмах
Шывпа вăл юхтăрах...

Çаврăнать çавра çил...
Аякра тăван кил.
Йыхăрать тăван кил:
«Эп парсаччĕ-çке пил...
Çав пиле аса ил.
Чунна тăвăр чух — кил,
Пурăнмашкăн вăй ил!»

## Ахрăм

Кăшкăрса чĕнетĕп — эс илтместĕн.
Шăппăн асăнатăп çех ятна —
Ахрăм пулайса вĕçсе çитетĕн.
Ахрăма ятла, хăть ан ятла.

Ахрăм çилĕ тулхăрать шеллевсĕр.
Курăпин — умра чăн сериал...
Саншăн пурнăç яланах — йĕвенсĕр...
Ăшăтмасть эп тăснă ырă ал.

Вăратать-ши канлĕхне çав ахрăм,
Эс куран-ши вĕçсĕр сериал?
...Пурнăçра эп ырă вăрлăх акрăм —
Чăн тĕреклĕх пачĕ ăраскал.

Çаралчĕ эп савнă çаран,
Сывлать вăхăт-вăхăт вăл ассăн.
Анчах вăл телейлĕ çынран,
Ешерĕ татах хĕл кайсассăн.

Вĕçеç кайăксем кăнтăра,
Вĕсемшĕн, паллах, тĕнче тикĕс.
Килеç çуркунне капăрах,
Хываç савăнса çĕнĕ никĕс...

Тумне улăштарĕ вăрман,
Шывне улăштарĕ çырма та.
Çынна икĕ пурнăç паман,
Пурне те паман — хаклама та.

Çĕмрен пек вататпăр ăна.
Çын çыншăн халь, калăн, шăна...

Хăш чухне эп ют çынна шанатăп,
Тем чарать шанма çывăхрине.
Вăл ман çумăмра пулсан шăнатăп,
Чĕрепе туятăп сив чунне.

Елпĕрчĕк кулли кĕрхи кун евĕр:
Çук çути те ун, ăшши те çук.
Хĕвĕнчи мăн чулĕ...
Ай, туссемĕр!
Сиртĕр Турă. Ан пĕрлештĕр çул.

Çак этемĕн пурнăçри
Ăнлавĕ:
«Пуç урлах пулсан та — тăвалла!»
Ăс-тăнпа кĕмĕлленмен тăнлавĕ,
Мул тесен курмасть вăл тăвана.

Пĕр-пĕр чух вăл алăкран шаккать...
Çăлăнăç кирлех тĕк — сик вакка...

Сана та, ăна та, мана та
Çуратнă курмашкăн телей.
Пилленĕ.
Анчах та манатпăр
Ăçтан килнине çут тивлет.

Шыратпăр, шыратпăр...
Тупатпăр
Çынра хыт-хура. Хамăра
Çĕр тĕнĕлĕ евĕр туятпăр,
Çапатпăр хĕрсех кăкăра.

Мăка çĕçĕпех вĕт ваклатпăр
Хăш чух пĕр-пĕрин чĕрине.
Теприн валли шăтăк чаватпăр —
Хавшакĕ ӳкейтĕр ӳпне...

Хавшакĕ ӳкейтĕр ӳпне...
Кĕтесĕ ун пултăр — ӳпле.

## Çывăх — çылăх

Çывăх, çывăх,
Çывăх кăмăлсем...
Çылăх, çылăх —
Ырату кӳрсен...

Çывăх, çывăх...
Ална тăс та — ил.
«Çылăх, тылăх»,—
Пăшăлтатрĕ çил.

«Çылăх, çылăх, —
Терĕ ăшри сас. —
Çынлăх, çынлăх
Çухатас пулмасть».

Çывăх, çывăх...
Хушăра — çыран...
Çынлăх, çынлăх,
Ыйхăран вăран!..

Пĕр чух мана эс кĕлчечек сĕнетĕн,
Пĕр чух парне чикетĕн кĕсьене.
...Миçе хутчен ман тĕлĕке кĕрсен те
Вут хыптараймăн лăпкă чĕрене.

Сана эп нихăçан аса илместĕп,
Шăнкăравпа ман канлĕхе ан тат.
Шухăшсемпе те каялла вĕçместĕп,
Телей анчах сунап пурнăçунта.

Шăпам тертпе пайтах ман тĕксĕмленнĕ,
Анчах вăл тăрă кӳлĕ пек таса.
Эп пурнăçра хам çемьепе киленнĕ
Вак-тĕвеке типтерлĕн сапласа...

Вут хыптараймăн лăпкă чĕрене.
Мĕн-ма çырап-ха çак йĕркесене?!

Пурнӑç — пыл та çу.
Кӗл — пурнӑç...
Курнӑç хӗвелпе,
Тӑвӑлпа курнӑç.

Çиле хирӗç ут,
Ут çиле майӑн.
Хӗнпе тулӑн,
Савнӑçпа тулайӑн.

Чӗрӳне эс ваклӑн
Пайӑн-пайӑн.
Çӑтмаха-и, тамӑка-и —
Кайӑн...

Утăн-и эс, чупăн-и?
Ĕмĕт — шиксĕр.
Ахах-мерчен тупăн-и?
Уçлăх — чиксĕр...

Ахах-мерчен кирлĕ-ши?
Кăмăл — выçă.
Лăпкасассăн чун ăшши —
Мĕн пĕр ывçă?

Йăпатать ахах-мерчен
Пĕр самантлăх.
Васкаварлăх — пит черчен.
Тимлĕх — шатлăх...

Ĕнер кăна çиçеттĕр кулăпа,
Ĕнер анчах пĕр кĕвĕ ĕнĕрлеттĕр...
Паян пыратăр иккĕн ик çулпа.

Тупа сире пĕр тĕвĕпе çыхман.
Пулни-иртни йăлт манăçнă иккен.
Çулăрсене шăлать, шăлать тăман...

Йăлт манăçнă. Шутлатăр — таврăнмасть.
Йăлт манăçнă? Тен, тĕлĕрет анчах пуль?
Чĕрӳ систерĕ пĕр-пĕр ир е каç.

...Анчах та палăрмаççĕ халь çулсем.
Йĕреççĕ, тулхăраççĕ чунăрсем...

Çакӑнта эп сана тӗл пулсаччӗ.
Ӑшшӑн култӑн:
«Тӑхта, пирӗшти».
Тӳперен çӑлтӑр яр шуса анчӗ.
Çул кӑтартрӗ сив уйӑх çути.

Чун туятчӗ:
Çак çул тӑвӑрахчӗ...
Тем сиссе шав вӑркатчӗ чӗре.
Халь анчах эп санпа юнашарччӗ.
Юнашарччӗ.
Юлан кӗвӗре.

Юхан шыв варрине вӑркӑнтартӑм
Эсӗ пухнӑ ахах парнене.
...Хуйхӑма хум айне-ши пытартӑм?
Тен, ӑс патӑм ухмах чӗрене?

Сирĕн анăр çине эп пусманччĕ,
Пахчăрта юрламан нихăçан...
Куллăм Сирĕншĕн пулнă вăтанчăк,
Сăнама тăрăшса аякран...

Пĕр йĕрке те Сире пиллеменччĕ,
Пĕр кĕвве те Сире пиллемен.
Пахчăрти шăпчăк темшĕн иленчĕ,
Юррăма шăппăн-шăппăн ĕнерчĕ...
Эп чĕнмен-çке ăна. Илĕртмен.

Сирĕн анăр çине эп пусмарăм,
Юрламарăм юрра пахчăрта...
Шăпчăксем çеç юрлаç мăшăршарăн
Ман умра. Тен, юрлаç умăрта?

## Пиçен çыххи

Чăн-чăн маяк пулсаччĕ эс.
Чăнах.
Чăн-чăн телей сунсаччĕ эп сана.
Чечек пуххи тытасшăнччĕ кăна —
Пиçен çыххи çакланчĕ аллăма...

Эпир санпа тĕл пулнă вăхăтра
Çанталăк тăчĕ чарăнми кăра.
Кулатчĕ çут хĕвел те вăтанса.
Тен, туйнă вăл çулсем уйрăласса?

Сапатчĕç вут эп савнă вăхăтра
Хĕм пилешсем. Хур кайăк — кăнтăра.
Хĕм пилешсем. Кĕрен пиçен çыххи...
Алла лексессĕн ванчĕ пыл курки.

Эс ӑна манайсан,
Вӑл сана манайсан
Пурӑнма, тен, пулатчӗ ансат.

Асӑнатӑр ирпе,
Асӑнатӑр каҫпа.
Чӗрӗре мӑка ҫӗҫӗ касать.

Ҫӑмӑл теҫҫӗ манма,
Ҫӗн телей шырама.
Чӗрене ҫӑрапа питӗреймӗн.

Ҫӗмрен пек ҫӗмӗрсе
Хушшӑра ҫын кӗрсен
Чӑн-чӑн туйӑмпа ҫех ҫӗнтерейӗн.

Тĕл пултăмăр.
Тек ним те кирлĕ мар.
Хĕвел кулса çӳл тӳпене хăпарчĕ.
Атя ларар-ха иккĕн юнашар,
Чун-чĕресем пĕр кĕвĕпе юрлаччăр.
Пĕр кĕвĕпе:
Эс — тенор,
Эпĕ — альт.
Юхайтăр кĕвĕ пулайса чăн юрă...
Анчах чăн юрă пурнăçра пулать.
Ку — тĕлĕк çеç.
Çырман, çырман-çке Турă
Пире дуэтлăх юрă...

Шур юр çинче ав мăшăр йĕр...
Телей патне-ши ăнтăлаççĕ?
Ăçта чĕнет çак тĕттĕм çĕр?
Çак тĕнчере мĕскер шыраççĕ?

Çак тĕнчере мĕскер шыраççĕ?
Çак пурнăçран мĕскер кĕтеççĕ?
Те савăнса вĕсем кулаççĕ?
Те хурланса вĕсем йĕреççĕ?

Пахи — паян вĕсем пĕрле.
Çак пурнăça пĕрле йĕрлеç...

## Виç пуспа

Виç пуспа ăсна сутатăн,
Çур пуспа — тус-тăванна,
Пуçсем тăрăх эс утатăн.
Хăв шутлатăн — тăвалла.
Тăвалла?! Унта çитме
Укçапа ултав сахал.
Çанă тавăрса кал-кал
Вĕренсемччĕ ĕçлеме.

Ăс-тăнна кăштах якат.
Мĕн акатăн — çав шăтать.

## Пăван

Пуçлăх эс паян.
Çавăнпа шутлан:
«Пуринчен аван».

Ку вăл санăн — чир.
Сан çумра эпир —
«Çут хĕвелсĕр ир».

Пурччĕ тус-тăван...
Эсĕ халь — пăван:
Вĕсене сăхан.

Пилсĕр пурăнан —
Хăвна ху пăван...

# Чун тараси



Ах, пурăнăç! Ах, пурăнăç!
Нумай кулянмалли...
Вăл çук. Ку çук.
Ман пурĕ пĕр
Пур канăç чун валли:

Янраттарап-и юррăма
Е çаптарап ташша —
Сапатăп хамăн куллăма,
Сапатăп эп ăшша.

Çитет-и вăл тăван патне
Е ют патне çитет —
Хуйха вырттартăр вăл ӳпне:
Çын хуйхăпа ĕнет...

Пĕри, тепри
Сипленейсен —
Сипленĕ манăн чун.
Туссем, ютсем те тăвансем,
Сунатăп ырă кун!

Ăс-тăна илеймĕн укçалла,
Турă панă кашнине виçеллĕ.
Ăс-тăна пайлаймăн çурмалла,
Пайлама сĕнсен те теветкеллĕх.

Упрама пĕлесчĕ ăс-тăна,
Варлас марччĕ çӳп-çаппа пĕр шутсăр.
Вăл — папак пек — тимлĕхсĕр шăнать,
Ывăнать тертлентерсессĕн шуххăн.

Упрама пĕлесчĕ ăс-тăна:
Вăл ача пек пит черчен, чăнах.

— Кама савса юрлан, сар кайӑк?
Мĕне саватӑн?
— Пурнӑҫа.
Тата ҫынна савса юрлатӑп:
Хӑй шӑпипе ҫын хӑй хуҫа.

Ҫан тавӑрса ĕҫлет пулсассӑн
Тупать вӑл кунлӑх ҫӑкӑрне.
Малашлӑха савса пӑхсассӑн
Кĕтсе илет хӑй телейне.

Ак эпĕ ирĕкре. Юрлатӑп.
Ҫак ырӑ вырӑна мухтатӑп.
Анчах иртет те савӑк ҫу —
Йӑлттам пуласлӑх маншӑн ҫук.

Тӳпе те йӑлтӑркка паян,
Йӑлтӑртатать ҫаран.
Ярас килмест куна сая —
Чупас килет ҫарран.

Ирхи асамлӑ сывлӑша
Каҫса кайса ҫӑтас.
Чӗр шыв пек тӑрӑ сывлӑмпа
Пите-куҫа ҫӑвас.

Ҫак ырӑ ир пек, манӑн кун
Иртинччӗ юрласа...
Тӳпеҫӗм, ялкӑш та — ан ҫун,
Ман пирӗшти пулсам!

Кам мĕнле ăнланать илеме:
Кам-тăр юр юрласа киленет,
Кам-тăр канăç шырать сăвăра,
Ӳнерте ăна хăшĕ курать.

Пĕрисем юратаç чĕр чуна,
Теприсем ӳстереççĕ хунав...
Черккере кам курать илеме —
Хăй чунне хăй пуçлать хĕнеме...

Мĕн чарать илеме хаклама?
Черккере пултарать вăл путма.

Йĕпписем йăл-ял выляççĕ
Çĕмĕрт аллинче:
Селĕм эрешсем пулаççĕ
Шупăр айĕнче.

Улмуççи те питĕ харсăр —
Вăл çыхать кĕпе:
— Çур уявĕ иртмĕ мансăр,
Ĕçлĕп çĕрĕпех.

Чиесем те тумланаççĕ
Шурă пир тĕртсе.
Калăн, пикесем тăраççĕ
Шăпине кĕтсе.

Çĕмĕрт, çĕмĕрт, питваскатăн
Шупăрна çыхма.
— Сивĕпе, тен, канашлатăн
Эсĕ тĕл пулма?

Пур-тăр çав санра хаярлăх:
Эс çеçке çурсан
Сивĕ те илет каваррăн
Çавипе сулса...

Юратаймăн çыншăн, юратаймăн,
Çыншăн пурăнаймăн пурнăçа.
Ах, мĕн-ма пăхатпăр çăмăлттаййăн:
Калăн, Çĕр çинче пĕр эс хуçа.

Çĕр çинче çителĕклех ырри те...
Темшĕн сахал мар-çке усалли.
Ыр çынна хăш чух манать Турри те, —
Хыт лекет ăна кун-çул хулли.

Çанă тавăрса ĕçле эс, тар тăк,
Пул таса, типтер юратура.
Тилĕ пек, яка чĕлхеллĕ мар тăк —
Тупăнать хураканни ура.

Юратаймăн çыншăн, юратаймăн,
Пурăнаймăн çыншăн пурнăçа.
Яланах Çĕр кăвапи пулаймăн,
Сăмахпа ĕçне пул хăв хуçа.

Шурă, шурă хут листи,
Шурă, шурă пирĕшти,
Кам чунне эс итлемен-ши?
Кампала пĕрле йĕмен-ши?

Кампала эс савăнман?
Кампала тупа туман?

Миçе çын куçне эс уçнă?
Мĕн чул шăпана эс хуçнă?
Мĕн кăна илтместĕн эсĕ!
Мĕн кăна пĕлместĕн эсĕ!

Тӳсĕмне виçес пулсан
Ларĕччĕ тĕнче тулса...

Эп вут çине пусасшăн марччĕ...
Йăнăшрăм-ши вара, ăнман.
Кĕтмен çĕртен тăшман çуралчĕ.
Юнать — сисетĕп — хыçăмран.

Тен, кăмăла хытармаллаччĕ
Пĕлмен, илтмен, курман пулса.
Кайран епле пурăнмаллаччĕ?!
Çурăлмаллаччĕ-им тулса?!

Ыраш аксан — вырса илеймĕн тулă.
Кĕтсе илеймĕн пыл — тăвар парсан...
Чуну кӳтсен — ăçтан çуралтăр кулă?!
Хунав та чĕрĕлмест-çке пĕр хăрсан...

Юлашки хут йăл кулчĕ,
Сывпуллашрĕ çу кунĕ.
Канлĕрех эп туятăп хама.

Çулла мар, кĕркунне,
Çулçă ÿкнĕ чухне,
Юрататăп сăмах шырама.

Анлăрах шухăшсем,
Ăслăрах туйăмсем,
Вичкĕнрех куçăмсем
Кĕркунне...

Ытлашши утăмсем,
Çилхăван-сăмахсем
Ала витĕр тухаç
Ун чухне...

Ӳтне витермеллех
Чулпа пересшӗнччӗ —
Переймерӗм...
Аллӑм ҫӗкленмерӗ.

Чунне витермеллех
Сӑмахсем каласшӑнччӗ —
Калаймарӑм...
Чӗлхе те ҫаврӑнмарӗ.

Пуҫа яшт каҫӑртса
Иртсе каясшӑнччӗ —
Иртеймерӗм...
Мӑнкӑмӑллӑхӑм ҫитеймерӗ.

Мӗскер ку ман?
Е вӑйсӑрлӑх,
Е шеллени?!

Тус-тантăш хапăл тунă ачаран,
Ватти-вĕтти тĕртсе яман мана,
Пуç тайнă кăмăлтан ӳсен-тăран.
Пуянлăх çеç кĕмен ман арчана.

Хаваслăх, тунсăх — иккĕш юнашар,
Пĕрне-пĕри, тен, çул парасшăн мар.
Пĕри сĕнет: «Çисем, çисем сим пыл».
Сĕнет тепри: «Çи пăрăçпа тăвар...»

Ҫăтрăм ятăм янăрас кулла,
Мĕншĕн пит салху ҫурхи хула?!
Пĕтĕм ҫут тĕнче халь вăранать,
Кам кама-тăр чĕререн савать.
Мĕн пирки-ши ман хунав хăрать?
Мĕншĕн, камшăн чунĕ ыратать?
Тен, сана, тин чĕрĕлнĕ хунав,
Вăл парасшăн тăванла хурав.
Тен, сана, яш-кĕрĕм, шухăскер,
Вăл ярать сиплевлĕ шухăшсем...

Чун туять, каласшăн вăл пире:
— Упрасамăр ҫĕр аннемĕре!

Пурте хĕрарăмран çуралнă —
Çĕр çинчи чи тӳсĕмлĕ, ачаш,
Чи вашават чунран.
Пĕр çĕр çинче пурнатпăр.
Хĕвелпеле тӳпемĕр айĕнче
Пĕр сывлăшпа сывлатпăр,
Пĕр Турăран ыйтатпăр.
Вăл панине кăна
Тĕрлĕ виçепеле виçетпĕр:
Кашниййĕн хăйĕн виçи —
Чун тараси...

Ирпелен хӗвел савса пӑхсассӑн
Ҫутӑ тӗкӗр евӗр кантӑкран,
Ачусем ахӑлтатса кулсассӑн —
Чи телейлӗ ҫын эс пурнӑҫра.

Тӗкӗртен пӑхса тапса сикен тӗк,
Уҫӑлсассӑн алӑк юрласа:
Ҫакӑ вӑл — телей, чунпа сисетӗн.
Мӗншӗн сан ҫӳрес пуҫа усса?

Пиллӗ сӑмаха ӑша хыван тӑк
(Яланах ҫутаттӑр пурнӑҫа)
Алӑк юрлӗ, тӗтреленмӗ кантӑк —
Пурнӑҫра телей, телей хуҫа!

Ик алла пин-пин ӗҫ...
Тӑрмашатӑн,
Черетре тӑраҫ вӗсем кӗтсе.
Чӗрӗлле хӗрӳ памасть вут-шанкӑ.
Мӗн илемӗ ҫурт ӑшши пӗтсен?!

«Шыв вӑл — укҫа», —
ҫынсем калатчӗҫ ӗлӗк,
Анне калатчӗ: «Шыв вӑл — ҫут тӗнче».
Миҫемӗш хут тӗлленчӗ-ши ку тӗлӗк:
Тӑп-тӑрӑ шыв.
Тӑратӑп варринче.

Пӑтранасран асӑрханса утатӑп...
Ӗмӗтӗмре те вӑл пулман — укҫа.
Куҫ шӑрҫине упранӑ пек упратӑп
Кил-йышӑма, тирпейлӗ пурнӑҫа.

Ху сыхлансан шӑпа та сыхлӗ теҫҫӗ.
Анчах кун-ҫулӑм лӑпланасшӑн мар:
Хӑш чух шеллевсӗр ҫумӑрсем лӳшкеҫҫӗ,
Хӑш чух сикет чарусӑр вут-кӑвар.

Пурӑнатпӑр:
Ӗҫлетпӗр,
Утатпӑр,
Чупатпӑр...
Пурлӑх пухатпӑр.
Ӑс-тӑн хушать,
Чӗре хушмасть.
Чӗре хушать — ӑс-тӑн хушмасть.
Хӑшне итлемелле-ши?
Хӑшне пӑхӑнмалла-ши?
Тӗшшине хывӑхран епле уйӑрмалла-ши
Этем мар, ҫын пулас тесен?

Курнине куҫӑмпа,
Илтнине хӑлхампа
Пуҫӑмра кӑмӑлтан эрешлерӗм.
Пӗрлештертӗм чунпа,
Хутӑштартӑм юнпа,
Чун-чӗре хушнине те итлерӗм.

Йышӑнсам, шурӑ хут!
Сӑмахсем ырӑ ут
Пулайса малалла ӑнтӑлинччӗҫ.
Е ачаш шӑпчӑк пек,
Е япшар чӗкеҫ пек
Ӗмӗтри ҫынсене тыткӑнлинччӗҫ.

Кирлӗ мар-ха мухтав,
Туссене — пысӑк тав.
Сутӑнман, сутӑнмастӑп, сутмастӑп.
Килӗм уҫӑ яри,
Чунӑм уҫӑ яри.
Ыр сунан ҫынсенчен ютшӑнмастӑп.

## Ваттисен çуртĕнче

Тумбочка çинче виç сăнӳкерчĕк:
Хĕр ача тинкернĕ инçете.
Кинеми те ун пекех чиперччĕ,
Куç хыватчĕç пурте пикене.

Ку вăл — кинемийĕн хаклă хĕрĕ.
Амăшĕ хăçан-ши асне кĕрĕ?!

Сарă каччă тăснă баянне,
Ăслă куçĕсем шевле тăкаççĕ,
Савăнса та тĕмсĕлсе пăхаççĕ
Калас евĕр: — Эп санпа, анне!

Арăмĕ-çке ывăлĕн — майра,
Амăшне курма ярать сайра.

Чăрсăррăн пăхать кĕре арçын:
Тутлăпа йӳççе пĕрле пайланă.
Вăхăтсăр-çке кайрăн, кил хуçи.
Кирлĕччĕ сулмак сăмаху санăн.

Саланмастчĕ, тен, тăван кил-çурт.
Ачисемшĕн кинеми халь ют?

Ватлăхне кунта халь унăнне
Кăшт çăмăллатасшăн тăрăшаççĕ.

Чĕринче анчах ялан: «Анне!»,
Тăванран тăван сассем янраççĕ.

Сăнӳкерчĕксем çинчи çынсем,
Канлĕ çывăраççĕ пуль вĕсем?..

Юр пĕрчисем ӳкеççĕ ман çине
Çине-çине, çине-çине...
Мĕн-ма вĕсем ӳкеççĕ ман çине?!
Мĕн-ма ларасшăн пурте пуç çине?

Пит-куç çинче сӳнеççĕ ав вĕсем,
Пуçăм çинче çеç ĕмĕрлĕх вĕсем...

Юр пĕрчисем çаплах, çаплах вĕçеççĕ...
Тур панине илсем ӳпкевсĕр теççĕ.

Ывăтса яр, ывăтса
Тикĕтленĕ пушшуна...
Çиллӳне çăтса, кулса
Кĕтсе ил эс нушуна.

Мĕн нуши — тăшман хулли?!
Шăрăхра типет вулли.
Йăл кул, типтĕрех хулли,
Пултăр вăл тĕнче кулли...

Кĕрлет самана, эй, кĕрлет,
Çак ахăр эсрел самана...
Чуна тăрмалать, хĕтĕртет —
Пăрасшăн çултан вăл мана.

Чăнах та, пĕр тикĕс пулман
Ман çулăм пурнан пурнăçра.
Кам чунсăр, тен, çав йăнăшман,
Кам ĕççĕр, тен, çав такăнман.

Тăван анне панă чĕре
Хăйпе хăй кĕреймĕ чĕрре:
Ик пуçлă пулаймăн пуйма,
Ик чунлă пулаймăн суйма.

Ылтăнпала ылтăн ылмашăççĕ,
Шырамаççĕ ырăран ырра.
Кашкăртан та кашкăр хăрамасть-çке,
Мĕншĕн, мĕншĕн çын хăрать çынран?!

Мĕншĕн пиччĕш чĕтрене ерет-ши
Шăллĕн çурчĕ хăтлăрах пулсан?!
Мĕншĕн, мĕншĕн татăлса йĕрет-ши
Пĕчĕк чун ют амăшне курсан?!

Мĕншĕн кӳршĕ ик çăра çакать-ши
Каçнă чух кӳрше самантлăха?!
Мĕншĕн куççульпе тĕнче тулать-ши?!
Мĕн çитмест-ши шавлă халăха?!

Кăшкăрса ыйтсан та — çук явап.
Ыйтăвĕ çаплах мăя пăвать.

Ан васкат вăхăта, ан васкат.
Вăхăтра — йывăç çулçă тăкать,
Вăхăтра — сив хĕлле, ырă çу.
Пăхăнмасть вăхăта калаçу.

Вăхăта пăхăнмаççĕ ĕçсем,
Ĕçсене пăхăнмаççĕ çынсем.
Харкашу, тĕркĕшӳ
урăм-сурăм...
Вăхăт хăй валеçет.
Ан юл сумсăр...

## Чун ыратать

Тӑрӑшсах пирус ӗмеççӗ,
Тем палкаççӗ, ихӗреççӗ.
Ик аякки — тӑвайкки...

Ӑс пама майне пӗлеймӗн,
Вӗрентсе сӑмах чӗнеймӗн —
Хатӗрех вӗсен чышки.

Юнашар тӑма — чӗр тамӑк,
Хӑлхуна тултар хӑть мамӑк...
Хупах çулӗ — паллӑ çул.

Çӳçӗ-пуçӗ, тумӗ — пӗр.
Тахӑш йӗкӗт, тахӑш хӗр...
Çакӑ паллӑ:
Чунӗ — чул.

Çут тĕнчене хăв ытамна илеймĕн,
Пур çыншăн пурăнаймăн
пурнăçа.
Çын телейне курсассăн — эп телейлĕ.
Кунта вара эп —
ирĕклĕ хуçа.

Çын чирĕпе эп чунăмпа чирлетĕп,
Эп хурлăхлă çын хурлăхне курсан.
Тиркевсĕр чĕремре
çăтмах тĕплетĕп,
Утатăп хирĕç
ытама сарса...

Мĕнрен илетĕп эп вăй-хал?
Мĕнпе ăна хушса пурнатăп?
Çут хĕвелтен килет кал-кал,
Ăш çумăра савса çăтатăп.

Вĕлле пек йышлă тăванран.
(Чăвашшăн çук инçе тăван)
Тата-и?
Уçă тăшманран.
(Хăратăп йăпăлти тусран.)

Асамлă вăй-и?
Çемьере.
Вăл сывă — эпĕ тӳпере...
Пĕлетĕп:
Çăкăрпа анчах
Çырлахас çук ман чун пачах...

Çиçет çут çăлтăрла куçу.
Вăл кӳлĕ пек таса.
Юхса пырать-çке пурнăçу,
Пырать вăл юрласа.

Тулса телейĕ тăкăнать,
Анчах шăпа — кăра.
Ыр çын (нумай чух) такăнать.
Ман саншăн чун хăрать.

Ах, самана!
Ăçта илсе каян?!
Миçе çын ĕмĕтне шеллевсĕр татрăн?!
Çула тухмашкăн çăмăл мар паян.
Пĕртăвансем те ют пек пурăнатпăр.

Туртать те туйăм — çӳп-çӳхе кĕсье.
Ыр кăмăлшăн çул алăкне уçмаççĕ.
Савса каласчĕ:
                        — Тус-тăван, тавсье!
Çук, тӳресем тăванлашма хушмаççĕ...

Тăван-пĕтенсĕр — хăрăк туратсем...
Йăх йăмрине чеелĕх кăшламасть-ши?
Ав анăçран васкаççĕ «тăвансем»,
Ав тухăçран васкаççĕ «йăхташсем».
Пĕр-пĕр «тăван» халь
Саламат явмасть-ши?..

Ыр сӑн-сӑпатлӑ кӗреке,
Хуҫи те чӑн асамҫӑ евӗр —
Мерчен сасси ытла та евӗк.
Мӗн-ма туймастӑп ирӗке?

Ларать пыра ҫемҫе икерчӗ.
Вӗри-ҫке чейӗ — юн шӑнать!
Пылак сасси чуна систерчӗ:
Кӗтмен хӑна. Кӗтмен хӑна...

Чунран юрӑ шӑранса тухсан,
Уй-хире ӑш ҫил пулса вӗҫсен
Эп ҫӳретӗп пуҫӑма ухса —
Тӳпе янкӑр, кӑмӑллӑ ҫынсем.

Ăспа пурнатпăр-ши эпир?
Чунпа пурнатпăр-ши?
Хăш чăнкă çыранпа эпир
Утса пыратпăр-ши?

Эп ăнсăртран кĕрсе ӳксен
Енчен лачакана,
Кам — ятласа, кам — хӳхлесе
Тăн кĕртĕ-ши мана?!

Мана, сана, сире, пире...
Кам уçĕ куçсене —
Хисеплеме кашни ире,
Кашни çĕр пусăмне?

Туятăп — халĕ хĕррипе
Утатпăр.
Уçăл, куç!
...Туйса илинччĕ чĕрипе
Çакна тӳре — улшуç.

Мĕнех вара? Мĕнех!
Пурнатпăр-ха
Пĕр — майĕпен,
Пĕр — сиккипе.
Çилпе килен сăмах —
Вăл вĕçтĕр-ха...
Пур пурнăç пытăр
Хăйĕн еккипе...

Мĕнех вара? Мĕнех!
Пурнатпăр-ха
Нумай чухне
Çукран та пур туса.
Ĕмĕтсемпе малах
Вĕçетпĕр-ха
Çӳл тӳпене
Çутишĕн тав туса,
Пур кунсене —
Пурришĕн тав туса.

Пурнатпăр-ха,
Пурнасчĕ-ха...

## Чечняра — вăрçă

Çук сикме каçалăк урлă...
Пулнă вăхăт шутлама.
Алăкран шаккать халь хурлăх —
Килнĕ ывăл уйрăлма.

Юлашки çула ăсатăн
Кĕр-кĕр туй кĕрлес чухне.
Салтак амăшĕ, çăтатăн
Эс тăварлă куççульне.

Пĕрисем халь мул пайлаççĕ,
Чап пайлаççĕ теприсем.
Камшăн, мĕншĕн юн тăкаççĕ
Чечняра ачамăрсем?

Итлесемччĕ, Çӳлти Турă!
Шеллесем хĕрарăма!
Никама та Тур ан çыртăр
Ачасем хыçне юлма...

...Хĕвел тухăç енне тĕмсĕлсе тинкеретĕп.
Мĕн илсе, мĕн парса тĕлĕнтерĕ-ши кун?!
Ав умри пахчара улмуççи ретĕн-ретĕн...
Çак çурхи илемпе киленет-ха ман чун.

Ах, паха улмуççи!
Чечекӳ тăкăнсан та
Савăнтарăн çынна эс
сим пыл улмупа.
Пур еткерлĕхӳ сан,
пур малашлăху санăн.
Ыр çын çех танлашайĕ сан кăмăлупа.

Утса тухнă çула тăрăшсах шĕкĕлчетĕп...
Хĕвел тухăç енне тĕмсĕлсе тинкеретĕп.

Курас марччĕ ман куç,
Ман хăлхам илтес марччĕ
Самантрах сăн-пите улăштарнă çынна.
Халь анчах кашкăрла, кашкăрла шăл хăйратчĕ,
Ак куратăп умра эп чăн-чăн куяна.

Çук, паян такăнатăп тесе шутламанччĕ,
Çут хĕвел ыр сунса ăсатсаччĕ çула.
Ах! Мĕн-ма-ши йĕрлерĕ мана çил-тăманĕ?!
Шăнса кӳтрĕ чĕре çак асамлă çулла.

Çутă çул пиллесе чĕрре кĕнĕ сăмахăм...
Çак çула ăнланать кашниех хăйĕнле.
...Кĕтсе илтĕм ире чĕптĕм куç эп хупмасăр —
Те ман савăнмалла,
те выртса йĕмелле?!

Тӗлӗкӗм ман — пӗлӗмҫӗ,
Ăрăмҫă хăш чух.
Тин хӗвелччӗ — пӗлӗтлӗ,
Халь чӗтрет ман чун.

Тӗшмӗш тейӗҫ хăшӗсем,
Калӗҫ:
«Анăрать».
Чун хускатмăш тӗлӗксем...
Усала?..
Ырра?..

Чуна хавас.
Çанталăка кура-ши?
Чупа-чупа ĕçлес килет паян.
Йĕри-тавра ыррине çех куратăп.
Тур панă кунăм мĕн тери пуян!

Çут хĕвелпе паян эп ăмăртатăп.
Парас килет пурне те ăшшăма
Çĕклем-çĕклем...
Парас çук татăк-татăк.
Чĕрем тулли сĕнетĕп юррăма...

Мĕскер акан — çавна выратăн теççĕ.
Акасчĕ ман телейĕн вăрлăхне.
...Чăн-чăн туссем чĕр шыв мана сĕнеççĕ.
Пур сĕнекен — кулсах —
виле шывне.

Çавракаçĕр чăмăрĕ —
Çук тухма утса.
...Халь хуçа кĕр ăмăрĕ.
Лăпланап — туйса.

Шалкăм çумăр,
Сивĕ çил
Ӳт-пĕве лăскать...
Усси пулмĕ вăй хунин —
Йĕрсене шăлать...

Пурнăçра ӳкни, тăни...
Тĕрлĕрен тивлет.
Тӳсĕмлĕх, кĕтме пĕлни
Чăн телей пиллет.

Иртĕ кĕç кĕр ăмăрĕ.
Пурнăç пурнăçах.
Çавракаçĕр чăмăрĕ —
Шанмалли пурах...

## Телей

Телей вăл пĕчĕк ача мар,
Алă çинче йăтса çӳреймĕн.
Ырсассăн канĕ,
чар, ан чар...
Кайăк пулса хыçран вĕçеймĕн.

Телей вăл сад пахчийĕ мар,
Хӳме тытса çилтен сыхлаймăн.
Курма тивмен тĕк пархатар
Телейшĕн пирĕшти пулаймăн.

Телей сим пыл чашкийĕ мар,
Пылне çисе ярсан тек тулмĕ.
Телей — вут кайăк,
чĕпĕ мар...
Вăл читлĕхре нихçан та пулмĕ.

Чуна хĕсет шăв-шав...
Халь шăплăх. Мĕн çитмест-ши?
Мĕскер шыратăп шав
Пĕр канăçа пĕлмесĕр?

Пĕр талăкран нихçан
Ик талăк пулас çук-çке.
Шăпа вăл хăй хуçа —
Лăпкать, парать-и çупкă...

Пăлхавçă кăмăла
Хăш чух хамах акман-ши?
Пухас чух хăмăла
Пĕр шелсĕр çунтарман-ши?!

Эс хальхи модăпа пурăнсассăн
«Çĕнĕ» вырăс, чăваш... сан çумрах.
Хăш чухне макăратăн:
— Тархасшăн,
Çӳлти Турă, каçар! Ан пăрах!

Сăмахна шутласа калаçмарăн,
Хакламарăн савни туйăмне.
Кайăксем те вĕçеç паран-парăн,
Эс çӳретĕн çаплах пĕчченех...

Ытамне йыхăрать шурă хурăн:
— Асилсем иртсе кайнă çула...
Телейпе тĕл пулма эс мĕн турăн?
...Çаврăнса килчĕ тепĕр çулла.

Шансан та, шанмасан та,
Ыйтсан та, ыйтмасан та —
Ман шухăшпа сăмах пĕр уйрăлми.
Кĕсье тулли пулсан та,
Вăл пуш-пушах пулсан та —
Нихçан та пулас çук эп шăл çемми...

Шав тăвалла утсан та,
Пĕр вĕçĕм такăнсан та —
Хальччен çулра пулманччĕ чарăнни.

Куçран пăхса кулсассăн,
Хыçран тапма пăхсассăн —
Чуна паха-и пурнăç пурăнни?!

## Афродита

Шуххӑн култӑн.
Питӗ хыттӑн:
— Эпӗ, — терӗн, —
Афродита!

Афродита,
Афродита,
Пурнӑҫпа эс
Ҫӑмӑл пытӑн...

Пӗвӳ, чӑн та,
Шурӑ хурӑн,
Сӑну, чӑн та,
Ҫутӑ ҫӑлтӑр.

Савӑн, кул,
Телейлӗ пурӑн.
Тамӑкран ҫех
Турӑ ҫӑлтӑр...

Мĕншĕн эпĕ пысăк айăпра?
Йăл кулмасăр утăм тăвайманшăн?
Сар хĕвел тĕнчи вăл — ман йăхра,
Тĕксĕм пĕлĕт тĕрме евĕр маншăн.

Мĕншĕн эпĕ пысăк айăпра?
Чун çине мăн çăрасем çакманшăн?
Усă кăмăл мар-ши ман юнра?
Сăнчăра татмашкăн хатĕр çыншăн.

Мĕншĕн эпĕ пысăк айăпра?
Хĕвĕме сулмаклă чул чикменшĕн?
Юлашки пĕр татăк çăкăра
Пайламашкăн хатĕр...
                    Анчах мĕншĕн
Юрламасть пӳрт умĕнче сар кайăк?
Çылăх каçайми-ши пысăк айăп?!

Çӳп-çӳхе те черчен çамрăк хулă.
Паркине куç савать кăлăхах.
Паркине умăмран илсе хурăп —
Ĕç валли çӳхе хулă паха.

Авкалатăп ăна, явкалатăп,
Эрешлетĕп хама кирлĕ пек.
Хама хам эп ĕç майăн калатăп:
«Ачасем те çак вулă пекех...»

Çĕкленӳ малалла çул хывать,
Тытнă ĕçĕм вун хут ӳсĕнет.
Юрăра пур асамлă хăват —
Урăхла эп курап тĕссене.

Çунатлă кайăксем чĕнеççĕ...
Хаваслă кĕвĕсем хистеççĕ...
Ак çил ачи чупать хыçран,
Çĕн сăвăсем ыйтать манран.

Сӳнтерчĕ куллине хĕвел:
«Çырма пачах пăрахрăн,
шел!..»
Хура çĕре шăварчĕ çумăр,
Тумла калаçрĕ:
«Пĕлĕт ăмăр.
Лăпланăр! Пит-куçăра шăлăр,
Малашлăха пăхса
йăл-л кулăр,
Çут сăнлă та тӳр чунлă пулăр...»

Утатăп эп асăрханса,
Тĕреклĕх, çынлăх шыраса...
Ан йĕр, тӳпе!
Кул, çут хĕвел!
Кун-çул,
Сăввăмсемпе çĕнел!..

## Шурă хурăн

Шурă хурăн, ырă ĕç эс турăн —
Туйăмсем çуратрăн чĕрере.
Сан пекех таса вĕсем, шап-шурă...
Савăнăç тулли кĕрекере.

Юррăма эс кĕтĕн, шурă хурăн,
Пурнăçа çутатрăн илемпе.
Шурă хурăн, сарăхмасăр пурăн,
Хуçăлмасăр çил силленипе.

Юррăма юрлатăр ăшă çил те,
Кайăксем юрлаччăр ывăнми.
Сан патна эп савăнăçпа çитĕп,
Шĕпĕлтетĕп танлăн, чарăнми...

## Эп телейлӗ эс ӑшшӑн кулсан

Тӗл пулма Турӑ ҫырнӑ пире,
Пӗр шӑпа вӑл пилленӗ пире.
Пӗр ҫулпа юнашаррӑн утар,
Пӗр-пӗрне ырӑ кун ҫех сунар.

Эп телейлӗ кун янкӑр пулсан,
Эп телейлӗ эс ӑшшӑн кулсан.
Кил вучахӗ ҫунсан ҫулӑмпа
Ҫамрӑк пулӑп ялан чунӑмпа.

Вӑй-хӑват иксӗлмест телейре
Юнашаррӑн тапсан ик чӗре.
Пӗр-пӗрне ӑнланса хисеплер.
Пурнӑҫ — тинӗс,
пӗр танлӑн ишер.

## Тĕлпулу

**1**

Тĕл пултăмăр.
Чăнах.
Асам сапать куçу...
Сăмах çине сăмах...
Юхать-çке калаçу:

Юратнă ĕç, çемье,
Пур пĕлĕш, тус-тăван...
Хавас ыйтса пĕлме.
Эс пуç тайса тăнлан.

**2**

Кăларчĕ тĕлпулу
Ума мĕн чул шăпа...
Каятпăр ик çулпа,
Ан такăнтăр çулу.

Ан такăнтăр çулу,
Ан сӳнтĕрччĕ куллу.
...Çак пĕчĕк калаçу
Чунра хăварчĕ çуй...

Халь пĕр-пĕрне эпир сăнатпăр,
Шыратпăр мĕн çухатнине.
Ĕмĕрлĕхе, тен, уйрăлатпăр.
Çак тĕлпулу çавах парне.

Юр пĕрчисем çӳçне шуратнă.
Пит-куçунта çулсен палли.
Çапах та аякра-ха ватлăх.
Вăй-хăвату сан — куç тулли.

Куллу яланхи пек вăтанчăк,
Çак халăх шавĕнче çĕтет...
...Çунатлă ĕмĕт пурнăçланчĕ
Кĕтмен çĕртен.
Кĕтмен çĕртен.

Пулать иккен çапла та пурнăçра.
Калаççĕ: «Шурă».
Эс калан: «Хура».
«Хура-çке», — теççĕ.
«Шурă», — тетĕн эс.
Çавра — пур çыншăн,
Саншăн — тăват кĕтес.

Мĕн тупрăн теççĕ эс ун çумĕнче?
Кулатăн ăшшăн:
«Маншăн вăл — тĕнче...»

## Чăлах сăмахсем

Ырă çак сăмахсем, çепĕç çак сăмахсем,
Пурпĕрех чĕрене ăшăтмаççĕ вĕсем.
Ăшăтмаççĕ юна, лăпкамаççĕ чуна,
Çутатмаççĕ куна.
Ах, хăватсăр вĕсем!
Ах, хăватсăр вĕсем —
Çак чăлах сăмахсем!

Епле тупас-ши кăмăлна?
Ăçта тупас?!
Йăл куллăм ăшăтмасть сана,
Сăмах — турпас.

Çумрах. Çитме çук аякра.
Пăчланчĕ сас...
Хӳме умра, хӳме хыçра,
Ăçтан тухас?

Вăрман пек халăх.
Эп — пĕччен.
Эс — танлă чун.
Чĕресĕр пулĕ эсĕ? Тен,
Унта сив чул?

Эс каланă, эпĕ илтнĕ —
Пĕтнĕ çакăнпа.
Канăçа мĕскер-ши илнĕ?
Йăшрăм эп чунпа.

Пăтăр-пăтăр, пăтăр-пăтăр...
Таталать пуль кĕç.
Пăлтăр — пӳлĕм,
                    пӳлĕм — пăлтăр...
Çук пек урăх ĕç.

Эп каланă, эсĕ илтнĕ —
Пĕтнĕ курнăçу.
Шухăшлатпăр — пĕтнĕ, иртнĕ.
Чĕрĕ-çке кун-çул!

Çĕр шыва-çке сават,
Эп — сана.
Çак мана вăй парать,
Çак кăна.
Çак мана шуратать,
Çак мана хуратать...
Тӳпене пĕр çĕклет,
Пĕр çĕре ӳкерет...
Çакăнпа — чухăн эп...
Çакăнпа эп пуян.

Пĕчĕкскер. Чăмăр пысăкăш çех те —
Пурнăçра вăл пуласшăн хуçа.
— Кирлине, — тет, — эп хам валеçетĕп.
Сан шăпу курăнать ман куçа.

— Шăпана эпĕр хамăр тăватпăр, —
Хирĕçлетĕп, — ан хĕсĕн ялан.
— Çавăнпа кун-çулу, тен, тăварлă?!
Канашлатăн сахал манпалан.

Пурнăç çилĕ улать урăм-сурăм.
Ăнтăлатăп шăпа çулĕпе...
...Пурнăçра пысăк утăм эп турăм —
Канашлатăп ялан чĕрепе.

## Тӑван ҫӗршывӑм, телейлӗ пурӑн

Вӗҫет, вӗҫет, вӗҫет-ҫке юрӑ
Ҫунат хушса ҫӳл тӳпере.
«Тӑван ҫӗршывӑм, телейлӗ пурӑн,
Телейлӗ пурӑн», — юрлать чӗре.

Савсам мана эп савнӑ евӗр,
Сана сунап ҫут ӑраскал.
Таса пулинччӗ ялан тӳпемӗр,
Ӗҫсем пулинччӗҫ ялан кал-кал.

Пӗр-пӗринпе тату пуласчӗ,
Амаҫури ан пулччӗ эс.
Хӑв халӑхна сан сума сӑвасчӗ,
Тата сана ман мӗскер сӗнес?

Вӗҫет, вӗҫет, вӗҫет-ҫке юрӑ,
Юрлать ман чун, юрлать чӗре:
«Тӑван ҫӗршывӑм, телейлӗ пурӑн,
Хӗвел ҫутаттӑр тӑван ҫӗре!»

*Хушса юрламалли:*

Тӑван ҫӗршыв, телейлӗ пул!
Ача-пӑча, янравлӑ кул.

Шухăшламасăр калаçни
Канăçна илмест-и?
Тăрăхласа пăхни
Куçна йӳçĕхтермест-и?

Мăнкăмăлăху
Чĕрӳне чĕпĕтмест-и?
Ăшă куллăм çине тăрăнса
Такăнмастăн-и?
Асту! Ан ӳк!

Ыратусăр пулмасть çухату,
Çухатусăр килмест юрату.
Кĕрешӳсĕр — шăм-шак та йăшать.
Кам тӳсет, кам чăтать — çав тупать.

Кĕркунне, епле ачаш пулсан та
Çамрăклăх юлман сăн-питӳнте.
Ах, пĕчченлĕх!
Мухтаву пулсан та
Капланать тăвар куççулӳнте.

Шăпа пиртен нумай хут аслă,
Кĕтменлĕхсем — çĕклем-çĕклем.
Кичемлĕхре те пур хаваслăх,
Ыратура та пур илем...

Эп самаях пĕлетĕп çав сана,
Эп пĕлнĕ чухлĕ эс хăвна пĕлместĕн,
Пĕр калăпа, пĕр виçене кĕместĕн.
Ултавсăр тарасу сан — эп кăна...

Тĕксĕм каҫа ҫивĕч туйăм
Ҫурса кĕрсен —
Ҫĕн хăватпа эсĕ тулăн.
Ан яр тĕртсе.

Ырă ирпе ырă шухăш
Кĕрсен чунна —
Васкавлă утăм ту эс шуххăн
Хавас куна.

Ҫитĕнӳсем малта чупсан
Юлан утпа —
Васка! Васка ална тăсса!
Кĕтмест шăпа.

Ҫаксем вара — ман ĕмĕтсем,
Васкаҫҫĕ кун курма вĕсем.

Чечек парнелеменшĕн каçаратăп,
Хавассăн капăрлатчăрах çĕре.
Ыр сăмаха — çухатасран упратăп, —
Хаклатăп та тытатăп чĕремре.

Чечек парнелеменшĕн каçаратăп,
Чун каçармасть усаллăн пăхнине.
Çĕкленейми-çке усăнать çунатăм
Элек, ултав сăхсассăн чĕрене.

Кун-çул шанать таптанă чечек евĕр,
Куç çухатать асамлă çутине.
Ыр сăмахсем пĕрне-пĕри парнелĕр, —
Лăпкаччăр, ачашлаччăр чунсене.

Çăвара уçма ансатчĕ:
Пĕр сăмах çеç каласаччĕ...
Мĕн хĕсет-ши кăкăра?
Пуш-пушах-çке халь чĕрем.
Пуш чĕре пĕр пăт таять пуль,
Çурăлса кĕçех каять пуль.

Çăвара уçма ансатчĕ —
Харăс ик чĕре аманчĕ...

Ан шыра илемлĕ сăмахсем,
Ан шыра чуна касаканне.
Юмахра çех çăтмахри кунсем.
Упрама пĕл Турă панине.

Йĕппе пусă ан тăрăш чавма:
Ăшăх пусă шăрăхра типет.
Айăпшăн пĕлсессĕн каçарма,
Çемьене ăшшу çитсен савма
Сив хĕлле те çут хĕвел çиçет.

Тӑвар тӑкса ятӑм,
Тӑвар.
Эй Туррӑм, кампа ятлаҫап?!
Тен, кӑмӑлсӑр пулӗ тӑван?
Тус-тантӑш пухать-ши «ҫӳп-ҫап»?..

Тен, эс уйрӑлма мел шыран?
Шӑлса тӑвара пуҫтаратӑп.
Ишсе тухас ҫук вӑл шывран...

Ан пултӑр шӑв-шав.
Тӑрӑшатӑп.

Мĕн-ма сана ятламалла
Туприн патне çул такăрришĕн?
Пĕр юрă, пĕр куççуль юхнишĕн
Мĕн-ма сана ятламалла?

Мĕн-ма ăна ятламалла
Ун чунĕнче кăвайт пурришĕн?
Сӳнес чух ялкăшса çуннишĕн
Мĕн-ма ăна ятламалла?

Мĕн-ма сире ятламалла?
Ăна эсир ыйтса илмен-çке.
Паха уйра чечек ӳсет-çке.
Сире, сире ăнланмалла!

Анчах епле ăнланмалла
Туприн чунне хĕн кăшласассăн?
Вăл пайăн-пайăн пайлансассăн?
Ун терчĕ — юрату пулсассăн
Айăп камра шырамалла?

Юрла, шухă çил, эс юрла,
Мана ан мухта, ан хурла,
Ан çавăр ӳпне пурнăçа...
Юрла, иртнипе курнăçам.

Юрла, шухă çил, эс юрла,
Ан пулччĕ мăкалнă çурла.
Вĕрсен — тикĕс вĕр, ан алхас,
Кассан — юн тухмалăх эс кас.

Савас тăк — чунтан савăнас,
Манас тăк — инçе вăркăтас.

Çулçăсем ÿкеççĕ ман ума,
Тĕксĕм пĕлĕтсем те çывăх, çывăх.
Кам каланă «йывăр уйрăлма»?
Тĕл пулма кайран —
пин-пин хут йывăр.

Кайăк хур вĕçет.
Кайри — мала!
Кик! Ки-как! хурланнăн сас параççĕ.
Ĕмĕр виçĕнмест утăмпала.
Кайăк мар, çулсем тек таврăнмаççĕ.

Пит кичем: çаралнă йывăççем,
Çывăх, çывăх тĕксĕм пĕлĕтсем те.
Ĕмĕтсем çеç çутă. Ĕмĕтсем
Пурăнасшăн çунатсем ĕнсен те.

Юхать, юхать, юхать-çке çемĕ.
Асаилӳ, аса килни...
Ах, çемĕ, çемĕ, эс — вĕçевлĕ,
Вĕçсе кайсассăн — килĕн-и?

Эс килĕн, килĕн! Çухалаймăн!
Хускатăн чунăм хĕлĕхне.
Чунра мĕн пур — веçех калаймăн,
Хут çех упрать хăшне-пĕрне...

Çунатусем ачаш ытла та.
Нумай-и кирлĕ хуçăлма...
Килсем, хускат чуна ытарлăн,
Ан пар усмашкăн пуçăма.

Мĕн-ма шаккатăн кантăкран,
Лаштра йăмра, ыйха путмасăр?
Манман, манман! Асра, асрах!
Вăл çеç пурнать пĕр сас-хурасăр.

Вăл çеç пуль тутлă тĕлĕкре.
Пар лашапа çула тухар-и?!
Мĕскер чăрмавĕ çак тĕтре?
Çул тупĕ чун-чĕре кăварĕ.

Ĕмĕлкесем пулса тăрса
Сывлар-и ассăн, ассăн, ассăн...
...Йĕрет, кулать çил кăшкăрса:
— Çул çухалать тăман тухсассăн...

Санпала тӗлпулу шырамастӑп.

Р. Сарпи

Эп санпа тӗлпулу шыраман.
Ҫӗн телей паракан — ҫуркунне.
Йышӑнман, йышӑнман, йышӑнман...
Йышӑнман эсӗ ҫын вырӑнне.

Чун кӗтесӗ — пытанчӑк тӗпел,
Вӑл упратчӗ ачаш куллине.
Шеллемен асамне ҫут хӗвел —
Ҫитерейнӗ унта ӑшшине.

Уҫса яр, ҫӗнӗ кун, кантӑка, —
Юрӑ юхтӑр.
Тӑнла эс, илтсем!
Юратсан — мӗне кирлӗ тупа?
Пӗр сӑмахсӑр туяҫҫӗ чунсем.

Ют пахчана кĕрсе улма татмастăп:
Йӳҫех пулсан та — хамăн пан улми.
Ҫын ĕмĕтне пĕр шухăшсăр татмастăп,
Пĕлетĕп: иртес ҫук йĕр хăварми.

Ҫул йывăр, ҫул тумхахлă — кармашатăп.
Ай-ай! Пит чăнкă — ишĕлет ҫыран...
Черченкĕ пĕвĕм тӳсессе шанатăп,
Эп юлăп сывă — аллуна парсан.

Каллех ав çут тĕнче вăраннă,
Хĕвел шевле тăкать каллех.
Кама — манман, кама-тăр — маннă.
Кама-тăр — çу, кама — хĕлле...

Паллана сукмакпа утма-и?
Унта — хуçа ӳсен-тăран.
Чĕрем анчах çавах ман майлă:
— Чупсан — çитен.
— Ӳксен?
— Тăран.

Тăран? Тăрайăп-ши тĕреклĕн?
Асат хуççассăн мĕн усси?
— Пуçна ухса утни кĕрнеклĕ, —
Пăшăлтатать ăс-тăн сасси...

Ҫӑрмантармӑп тек.
Канӑҫлӑ пурӑн.
Вӗҫӗхтертӗм пӑртак, пӗр кана.
Суккӑр тӗвӗ чунра ҫыхса хурӑп:
Ман тӗллевӗм —
манмашкӑн сана.

Вӑхӑтпа, тен, сипленӗ суранӑм
Пулмасассӑн санпа юнашар.
Чун кӳтсен те —
тасалӑх упранӗ.
Шел, таса юрату хакра мар.

## Сасă

Ăшă çил евĕр
Килет кассăн-кассăн...
Пурнăç пит хаклă
Асра вăл пулсассăн.

Лăпкă та тарăн —
Сиплет чунăма.
Пин кĕвĕпе
Хăналать кунăма.
Вăл уйрăлсассăн
Манран вăраха
Эп çухататăп
Калас сăмаха...
Хаклăран хаклă
сасă.

Пулман нимех те пирĕн хушăра.
Туятăп эп — пулма та пултараймĕ.
Миçе сăнар тăрать пуль сан умра...
Çавна таса чĕремçĕм ăнланаймĕ.

Çăтатăп тарăхса ыратăва.
Эй, Турăçăм!
Манмашкăн хал парсамччĕ!
...Хам тилмĕреп çавах юратăва:
— Ăш ыйхинчен ăна эс
вăратсамччĕ!

...Ыйту — чӑрмав,
мӑнкӑмӑллӑх — ансат.
Пуҫна ҫӗкле те
ут ҫӗр хуҫи евӗр.
Ах, куҫусем!
Унта мӗн чул асап!
Ҫак пурнӑҫра пӗр нуша ҫех —
тӳлевсӗр.

Каласа пар мана хуйху ҫинчен.
Чуна уҫса итлем
ним сиктермесӗр.
Ав мӑшӑр кайӑк ват йӑмра ҫинче
Епле телейлӗ! Туссӑр ҫын — телейсӗр.

Тулли кӗсье. Анчах укҫа —
тус мар.
Тус пеккисем, инфляци пек, вылянчӑк.
Ҫук мулӑм.
Чунӑм ӑшшине пайлар.
Туссем пуртан пуль
ыранхи кун — шанчӑк!

Кавир тӗртесшӗн эп чечексенчен,
Сарса ӑна хурасшӑн сан умна.
Пин туйӑм вылӗ унӑн анӑнче,
Ҫӗр кӗвӗ илемлетӗ ыр кунна.

Хӗрли, шурри, тӳпе пек кӑвакки...
Илемсӗр тӗс кӗртместӗп эп унта.
Кун-ҫулӑн питӗ сарлака сакки —
Ӑраскалу ан кайтӑр ҫумӑнтан.

Шутланӑ пек пулайӗ-ши эреш?
Савсах тӗртетӗп хаклӑ кавире.
Юратупа каварлӑх — йӗкӗреш:
Кам калӗ-ши?
Мӗскер кӗтет пире?!

## Сӑмах

Сӑмахра ҫӳп шыран кӑлӑхах.
Суя питлӗ пулман нихӑҫан.
Чӗрене хирсе тухнӑ сӑмах
Кунӑнта чун уҫҫи пултӑрах.

Усала сирсе ятӑр вӑр-вар,
Хуйхуна ҫапса ваттӑр чӑл-пар,
Ҫут хӗвеллӗн ҫутаттӑр ҫулна.
Чӑн-чӑнах вӑл.
Выляв ҫӑмхи мар.

Тĕлленмен те,
Ах анчах!
Эс — умра. Йăл кулă.
Хĕмленмест ман чун пачах,
Илĕртмест çак пулăм.

Эс ширанă — тупнă мул,
Çынлăх эп ширанă.
Иккĕн утнă тăвăр çул
Шыв-шурпа хупланнă...

Тĕлсĕр-пилсĕр калаçу
Кам чунне вăраттăр?
Каснă — татнă.
Ним те çук.
Ик çулпа утатпăр.

## Калаçу

— Мăн кăмăлна кăшт пĕчĕклет.
— Тирпейлĕх вăл мăн кăмăл-ши вара?
— Ун пек çын пурнăçра пĕтет.
— Пит сумсăр-ши тасалăх пурнăçра?
— Укçу пулсан илен веçех.
— Эп мулсăрах çитейрĕм çак куна.
— Çĕре ансам! Ытла вĕçен!
— Каçар. Хальччен сутман эп
хам чуна.

Ăшах та мар,
Сивех те мар.
Кун — чун уççийĕ!
Атя-ха пĕр çынла утар,
Ман чун хуçийĕм.

Мана итле, сана итлем...
Эпир пĕр мар-и?
Килĕшӳре чăн-чăн илем,
Чăн канăç мар-и?

Пуçпа шутлатăп эпĕ,
Эс —
Чунпа шутлатăн...
Эп çавăратăп халь кĕтес,
Эс — салататăн...

Ăшах та мар,
Сивех те мар.
Кун — чун уççийĕ!
«Мана кăшт ирĕке кăлар», —
Тет чун хуçийĕ...

Çынна кӳрентерме нумай-и кирлӗ?!
Чӗлхе чараксăр, ыткăнать сăмах.
Шанмасть чӗре. Пулмастпăр урлă-пирлӗ.
Кураймансем, ан тив, палкаччăрах.

Халь çуркунне. Çӗршыв юрланăçемӗн
Уçатăп яриех чӳречене.
Чӗнет урам. Юхать асамлă çемӗ.
Аса илетӗп иртнӗ кунсене.

Çак уйрăлу вăл тӗрӗслев пуль терӗм,
Сана та кӗтӗ тӗрӗслев — çулу.
Çунман-ха пирӗн юрату кӗперӗ.
Туятăп эп: малта-ха тӗлпулу.

Ыр хыпара илтме те ырă,
Вăратрĕ вăл пур-çук вăя.
Мĕн чул ĕçленĕ эп паян!
Çавах хама туймастăп ырнăн.

Юрлас килет, савнас килет.
Çĕр чăмăрне ман ыталасчĕ.
Мĕн аванни — манран пиллев,
Çак ăшă туйăмпах пурнасчĕ.

Пур телее пайлас пулсан
Çăкăр татки пек пайăн-пайăн
Чи-чи мăнни — пулайĕ сан.
Ун пек туссем тата нумай-и?

Ман пĕр çĕршыв,
Эп урăха савмастăп.
Пуянлăхне савмастăп, —
пурнăçне.
Эп ют çĕрте пуласлăха
курмастăп.
Кам ют çĕрте хавас туять хăйне?!

Ман пĕр çĕршыв.
Вăл хӳтлĕх, канлĕх маншăн.
Вăл маншăн — йӳçĕ пыл,
пылак шерпет...

Вăл маншăн — çут сăнар.
Эп çав сăнаршăн
Хама шеллемĕп.
Вăл çакна сисет.

## Пĕртăвансене

Сăра та пур, хуплу та пур, шăрттан...
Куç ăна мар, тăван, сана тинкернĕ.
Эпир кунта халь улттăн пĕртăван,
Пире анне сăвап парса ӳстернĕ.

Ĕçме-çиме килте те пултаран,
Пĕрне-пĕри час-час курни паха.
Пĕрне ав ватлăх çапнă урaран,
Тепри ав ӳкнĕ чăтайми хуйха.

Ăш пиллĕ калаçу — чĕре сури.
Васка-васка пур сăмаха çăтатăп.
Епле аван-çке тус-тăван пурри!
Эп вĕсенче малашлăха куратăп.

## Шӳтлесе

Чашӑк-тирӗк — шӑкӑр-шакӑр...
Ман куҫҫулӗм — шӑпӑр-шапӑр...
Йӳҫ сӑмах чунра йӳҫет...
Ҫурӑлатӑп эп кӗҫех.

Алӑк шалт! хупӑнать.
Йӳҫ сӑмах чунра юлать.
Хыттӑн-хыттӑн пускалатӑп,
Урлӑ-пирлӗ уткалатӑп.

Шыв сапатӑп — вут сӳнет...
Таврӑнас. Ҫемье кӗтет.

Ир-ирех пуҫтартăм вырăна,
Ҫурт-йĕре тирпей кӳмеваскарăм.
...Ыр куна пуҫларăм ырăпа.
Санăн умăнта ман пысăк парăм...

Симĕс ҫулҫă, ҫĕмĕрт — шур чечек.
Йăл кулан хĕвелĕм, кайăк-кĕшĕк.
Вĕтĕр-шакăр тухнă кĕшĕл-кĕшĕл.
Ҫут тĕнче мĕнле пуян, чечен!

Ах! Мĕнле ҫăлас ҫак илеме?!
Юнашар ҫӳрет-ҫке усалли те.
Илеме пĕлмест вăл шеллеме:
Чунĕ путсĕр, путсĕр ун алли те...

Ыр хăват вăл пурпĕр вăйлăрах.
Пĕр унпа сар кунăм чĕрĕ мар-и?
Аслă Турă! Хăватна парах.
Таврăнми ҫухалтăрччĕ тип шарĕ...

Инçе çула паян тухатăп
Кĕтмен çĕртен, кĕтмен çĕртен...
Пур-çук укçа-тенке пухатăп,
Тен, тус-тăван парать кивçен?

Тăванăм çук. Ăçтан тупам-ши?
Пускил укçа тытман çур çул.
«Çĕн чăвашсем» патне утам-ши?
Мĕскĕнленем-ши:
— Турă пул?!

Процентпала укçа илетĕп,
Хушса тӳлетĕп икĕ хут.
Эп парăм тӳлесех тӳнетĕп,
Пăвать мана çĕршыв — панкрут.

*1996*

Çунашкана вăйпах туртатăп,
Çак михĕре — шалу укçи.
Çан тавăрса чуста çăратăп.
Пур çăкăр... Килĕм-йышăм, çи!

Ача-пăча канфет çиесшĕн
Е астивесшĕн кăлпасси.
Тата ăçта çитсе килес-ши?
Шараçăн пулĕ-ши усси?

Турри парсан татах, тен, пулĕ —
Е çăнăх парĕç, е песук?
Шăвать çуна... Пуяншăн — кулă,
Ăс-тăншăн — пĕтсе çитнĕ сум.

*1996*

## Мăшăрăма

Вĕçеç кайăксем мăшăршарăн,
Кĕрлет çут çанталăк умра.
Утатăп санпа юнашаррăн,
Туятăп — тĕреклĕх çумра.

Пурнан пурнăçа шĕкĕлчетĕп —
Хури нумайрах е шурри?
Сăнра — пирĕн пурнăç пичечĕ,
Телей — пирĕн пĕрлĕх пурри.

Пулнах пурнăçра ăнланманлăх
(Çуратнă пире ик анне),
Ăс панă Турри каçармалăх,
Тĕреклĕ ачамăр — парне.

Вĕçеç кайăксем мăшăршарăн,
Кĕтрет çут çанталăк умра.
Пуласчĕ ялан юнашаррăн, —
Телей хуçалантăр чунра.

Арçын тытса пырать хушамата...
Хĕрарăм — çурт-йĕре, çемье илемĕ.
Пит тăрăшса пайлатăп вăхăта,
Анчах пĕчĕкленмест ниçтан çĕклемĕм.

Юлас килмест пĕрре те пурнăçран:
Унта васкамалла, кунта чĕнеççĕ...
— Пăрах сăввусене! — эс кăшкăран.
Çырма пăрахрăм. Кĕвĕсем хистеççĕ...

Çак сăвă-кĕвĕпе хăпартланса,
Тен, çак куна çити эп пурăнатăп?
Çук, çӳреместĕп муза шыраса.
Эп ун валли чун-чĕрене уçатăп.

## Яла кайма тухсан

Тăван ял йыхăрать айлăмра.
Эп çулра. Ман аннеçĕм кĕтмест.
Çамрăк чун хăрама вăл пĕлмест.
Çурхи кĕвĕ анчах чунăмра.

Талпăнатăп вăй çитнĕ таран.
Виçĕ утăм...
Ак улттă, ак çиччĕ...
Пĕтĕмпех эпĕ ӳкрĕм тара.
Туртăм пур тăк, каç кӳлĕм, тен, çитĕп.

Чĕркуççийĕм таран сĕлкĕш шыв.
Çурхи шыв урана пĕçертет.
Юлайсан çакăн хыççăн эп сыв...
Çук тăк — вутăш кĕлли витерет.

## Туссене

Выç ларман — тата мĕн кирлĕ?
Ачасем те — куç тулли.
Пурăнмастпăр урлă-пирлĕ,
Çын çинче те — чи сумли.

Таччăн хупăнса ларатпăр
Пĕтерсен килти ĕçе.
Телевизорпа супатпăр,
Ылмашать унпа веçех.

Пит сайра шăнкăравлатпăр,
Вăрăмланчĕ тейĕн çул...
Пĕр-пĕрне мансах пыратпăр,
Чун хытать е тимлĕх çук?

## Тӑван ялӑма

Çук тулли юхан шыв. Çук вӑрман.
Çеçен хир, çеçен хир, çеçен хир...
Сан çинчен чаплӑ юрӑ çырман,
Пурпӗрех эс пилленӗ çут ир.

Ӑшӑх шывӗ пӗр тан Атӑлпа,
Умри сад — пӗртӑван вӑрманпа.
Уйӑм-хирӗм пуян çӑкӑрпа,
Ялӑм-йышӑм — тулли кӑмӑлпа.

Çеçен хир ачашланӑ мана,
Вӑштӑр çил çупӑрланӑ мана.
Савнӑ ял... Курнӑнах тӑвана,
Пултарап-и ӑна эп манма?!

Пуç çитмест пуль сире пуç тайсан,
Юрласассӑн — çитмест пуль сӑмах.
Вӗçсе çитӗттӗм майӗ пулсан
Сан пата кӗттермесӗр вӑрах.

## Çуралнă кун

Сăпас! Сăпас! Хресчен уявĕ.
Ак пан улми сĕткен сапать.
Сим пыл чашки... Епле кун савăк!
Умра — сĕтел тулли апат.

Çак тулăх ир куçа эп уçнă,
Çĕре вăратнă кăшкăрса.
Таса чĕреллĕ, ырă куçлă
Пулма пилленĕ çĕр тулса.

Мана чĕр пурнăç пиеленĕ,
Юлма хăйман эп парăмра:
Вăй пур таран ятне çĕкленĕ
Хастар ĕçре, çĕн юрăра...

Сăпас! Сăпас! Пуçа таятăп.
Юнпа эп çыхăннă санпа.
Сăпай пуласчĕ, ырă ятлă.
Сан пек пуласчĕ чунăмпа.

Асамлă юрăсен хăвачĕ,
Ăшран ăна эп кăларман.
Атте юрри мана вăй пачĕ:
«Уй варринче лаштра юман»...

Анне юрри ыр кăмăл пачĕ,
Сăпка юрри — анне парни.
Чун-чĕрене чĕртсе хăварчĕ
Савни юрри: «Эс — чи савни!»

Самант — лăпкать чуна ачашшăн,
Самант — илет те силлесе...
Çапах та кун çути вăл маншăн —
Юрлатăп хурлăха сирсе...

## Сад чечекре

Тăван ялта пахча ăсти — аттеччĕ.
Улмуççисем, чие те хурлăхан...
Ыр кăмăла вĕсем саваççĕ тетчĕ.
Атте вилсен сад юлчĕ хурлăха.

Ача-пăчашăн ырă-çке ытла та,
Сад пахчинче çӳрес килет татах.
Тăван атте ытарлăн ыталанăн
Пăшăлтататççĕ çулçисем: — Тавах.

Тавах, анне! Атте садне упрарăн.
Савма вĕрентрĕн илеме пире.
Сан пиллĕхе чун-чĕререн ямарăм:
Сад лартрăм. Вăл шап-шурă чечекре.

## Аннене

### 1

Вăхăтсăр эс ватăлнă, анне,
Кун-çулу, чăнах, ансат килмерĕ,
Парăнмарăн. Йăх-ăру еткерĕ —
Ачусем сиплеççĕ чĕрӳне.

Алă пӳрнисем те пĕр пек мар.
Эпир йышлăн: миçе тĕрлĕ кăмăл!
Пĕрлĕх пур тăк — инкекре те çăмăл,
Йыхăр çеç — пулатпăр юнашар!

### 2

Пурнăçунта тăшман пулман,
Йывăр ĕçе те парăнман, —
Виçесĕр тӳсрĕн хуйхуна.

Çурхи шыв пек инçе çулсем,
Пĕр самант пек иртен кунсем
Сӳнтернĕ санăн куллуна.

Юр пĕрчисем, юр пĕрчисем...
Мĕн-ма ӳкеççĕ-ши вĕсем?!
Шап-шур шуратрĕç сан пуçна.

## Ачалăх

Илтетĕп сасă: кăлтăр-кăлтăр...
Уяв парни çĕлет анне.
Чӳречерен сăнать çут çăлтăр —
Куç хывнă капăр кĕпене.

Тем кĕтнĕн çăварне ав карнă
Атте парни — кăвак пушмак.
Мăлатукне атте хăварнă,
Пиччем шаккать хĕрсех: шак-шак!

Ирпе ирех тухса эп чупăп.
Вĕл вĕçĕ чĕнтĕрлĕ çуха.
Савнăçпала çĕкленнĕ чунăм
Çапах та манаймасть хуйха.

Сăнаççĕ ман хыçран вăраххăн
Аннен шывланнă куçĕсем.
...Хĕрĕх пĕртен утать хăраххăн,
Хĕнпе туптанчĕç çулĕсем.

## Салам сире

Салам сире, тăван хирсем!
Юратнă ял, салам сана та!
Эсир савса кĕтсе илсен
Эп ача евĕр савăнатăп.

Пӳрт умĕнчи лаштра йăмра,
Тапса тăран таса çăлкуçĕ,
Эсир анне пек асăмра.
Юрлать чĕрем, ăс-хакăл уçă.

## Асаннене

Темскер асилтĕн те эс — ăшшăн култăн.
Тӳрлетрĕн вашаватлăн тутăрна.
Çак самантра мĕскер, мĕскер-ши куртăн,
Мĕнле вут-çулăм хыпрĕ кăкăрна?

Çак ыр самант йăл кулчĕ те —
пăнч çĕтрĕ...
Ик çуллăх арăм... Ик пепке — парне...
Таса чунпа эс ывăнмасăр кĕтрĕн
Чĕрӳ туйсассăн та вăл çуккине.

Яш ĕмĕр вăхăтлăх тесе калаççĕ,
Эс вылятмарăн нихăçан ăсна.
...Мăнукусем хут купăса тăсаççĕ
Аслашшĕ евĕр çăмăллăн, ăста.

## Ывăлăма

Тĕрĕсне каласан — кам юратĕ?
Икĕпитлĕх чунна килĕшмест.
Эс — ман пурнăçăн пысăк турачĕ,
Юнпала парăнни, тен, сӳнмест?

Ах, ан сӳнтĕрччĕ, юлтăрччĕ чĕрĕ,
Сая каймĕччĕ çул шутлани.
Кĕске — кунăм, пит вăрăм-çке çĕрĕм.
Çутă çăлтăрăм — эс суйманни.

Савăнатăп сан тимлĕ уттушăн,
Пил хăвачĕ çитсе пытăрах.
Тус-тăван ал тăсман чух — хăрушă,
Эс ална тăсмасан — хăрушрах.

Сансăр тунсăх мана, тăван ял.
Тăван кил, сансăр эп
тунсăхлатăп.
Тунсăхра усăнать манăн ал.
Ĕç çук пек
урлă-пирлĕ утатăп.

Çамрăк мар. Тулăх килĕм.
Çемье.
Çав-çавах ял енне тинкеретĕп.
Çав-çавах илĕртет тăван ен,
Илĕртет-çке сăваплă еткерлĕх...

## Аттене асăнса

Атте, сана аса илетĕп,
Санран халь эпĕ аслăрах...
Ачалăха çитсе килетĕп,
Тус-тантăша унта курап.

Сад пахчинче чупса çӳретĕп.
Улми-çырли...
                    Ах, чун уççи!
Сим пан улми татса çиетĕп.
Пылак çырла — ывçи-ывçи...

Эс çанă таварса ĕçлетĕн,
Аппа-тете те тăрăшать...
«Ăçта эс?! Ма пит час çĕтетĕн?» —
Мана кил-йышăм йыхăрать.

Пĕр анне пире çуратнă,
Пĕр анне ăс панă.
Çĕр анне савса лăпканă.
Пурнăç пире ватнă...

Пĕр хĕвел пире çутатнă,
Турă çул кăтартнă...
Шеллемесĕр (йăх ăратлă)
Пурнăç пире ватнă...

Пĕртăван. Пĕр пек пуль теççĕ.
Тăрăш та — пулаймăн.
Тивлете ыйтса илмеççĕ,
Суйлăн та — тытаймăн.

Никам пек те пулас марччĕ,
Ман хам пек пуласчĕ.
...Пур тăванăн терчĕ-шарĕ
Тарăн йĕр хăварчĕ.

## Çемье

Кам кăна пуль ăс памарĕ,
Кам кăна пуль вĕрентмерĕ —
Сиртен ăсли пур-ши халь?
Чĕвĕлти чĕкеç эс халĕ,
Ăмăрт кайăк — упăшку.

Сив сăмах каламан эсĕ,
Сив куçпа та пăхман эсĕ.
Вăл та саншăн — Турă пек.

Эс пĕçернĕ апат тутлă.
Тав сăмахĕ хутлă-хутлă.
Амантмасть усал сăмах.

Ай-хай, пурнăç, эс — çăтмах.
Тĕлĕк мар пулсан.
Чăнах.

# Çутă ĕмĕтсем



## Каламан

Эс мана каламан виç сăмах,
Эп сана каламан виç сăмах...
Хушăра вăркăшайрĕ те хум —
Хĕвелле ялкăшайрĕ ман кун.

Ятупа тинкереп анăçа,
Ятупа тинкереп тухăça...
Çĕнĕлле халь курап тĕссене,
Çĕнĕлле халь хаклап çынсене.

Хăш чухне, пыра ларнăн çăмах,
Шеллемесĕр пăвать виç сăмах...
Эс мана вĕсене каламан,
Эп сана вĕсене каламан...

*Хушса юрламалли:*

Каламан, калас та çук.
Каламан, калас та çук.
Сан чунунта вырăн çук.

Уй-хир урлă каçрăм та —
Чартăм пĕр кана ута...
Пăхрĕ куçран янавар
Ыйтнăнах: «Мана шăвар.
Эс ман вырăнта пулман,
Çавăнпа мана туйман...»

Турă панă пĕр пуç.
Панă вăл мăшăр куç.
Пурнăçра миçе хут такăнман!
Шуррине — хуратса,
Хурине — шуратса
Пурпĕрех малалла ăнтăлан...

Çиччĕ виçрĕм,
Пĕрре — касрăм.
Шутламанччĕ йăнăшма.
Тӳрĕ çул çинчех аташрăм.
Ихĕрет çумрах тăшман...

Çутăлать —
куç хупмасăрах,
Курăнать —
тинкермесĕрех,
Илтĕнет —
тăнламасăрах
Çĕнĕ кун, çĕнĕ кун, çĕнĕ кун.

Пурăнать —
кунĕ пур пулсан,
Юрататъ —
туйăмĕ пулсан,
Тӳсеет —
чăтăмĕ çитсен
Чĕрĕ чун, чĕрĕ чун, чĕрĕ чун.

Мĕн-ма кĕретĕн тĕлĕке?
Çук, чунпа мар, ăспа эп хирĕç.
Ун пек чухне кун арăш-пирĕш...
Мĕн-ма кĕретĕн тĕлĕке?

Çунатăп кунĕпех вутра,
Чĕре çинче выртать мăн чул.
Ал тăсакан çумра мĕн чул!
Эс маншăн — пĕр управ-утрав...

Ман канлĕх, шатлăхăм — ĕçре,
Чун-чĕрепе сăмах шыратăп.
Умра эп çут сăнар куратăп —
Вăраххăн сирĕлет тĕтре...

## Çерем çинче çырла çисе çӳрерĕм

Çерем çинче çырла çисе çӳрерĕм,
Çерем çинче çырла çисе çӳрерĕм.
Ай-хай çĕр çырли
Пулнă çеçки палăрми.

Сад пахчинче улма çисе çӳрерĕм,
Сад пахчинче улма çисе çӳрерĕм.
Ай-хай сар улми
Пулнă çулçă палăрми.

Ял-ял урлă тус-тăвана шырарăм,
Ял-ял урлă тус-тăвана шырарăм.
Ай-хай, тус-тăван,
Ытла инçе пурăнан.

Ытла инçе, ытла инçе пурăнан,
Ытла инçе, ытла инçе пурăнан.
Ай-хай пурăнан,
Пурпĕр çывăх курăнан.

Эсир халĕ чăн-чăн çывăх тăвансем,
Эсир халĕ чăн-чăн çывăх тăвансем.
«Ай-хай пырса çӳрĕр», —
Йыхравлаççĕ чĕмпĕрсем.

Санпа манра пĕрпеклĕх çук.
Шывра ишен... Вутра çунатăп...
Кĕтетĕп пурпĕр çураçу.
Эп Турăран çавна ыйтатăп.

Санпа манра пĕрпеклĕх çук,
Пĕр чĕлхепе çех калаçатпăр.
Ман чунăмра — хĕлхем, сан — çук.
Çапах та пĕр сукмак шыратпăр...

Ылтăн çулçă ман ума ÿксессĕн
Çуркунне пĕрмай аса килет:
Урампа килетĕн хирĕç эсĕ,
Тепĕр енĕпе çав.
Эп — киле...

Çавăн пекех çуркунне те,
Кĕркунне те çавăн пек.
Çавăн пекех эс кĕтетĕн,
Эп кĕтетĕп çавăн пек.

Çул юппи икке пайланнă,
Хăш енне-ши утмалла?
Тен, сулахайра ман канăç?
Тен, утас сылтăмалла?

Лӳшкет, лӳшкет-ҫке кӗрхи ҫумӑр,
Уй-хиршӗн савӑнӑҫ паян.
Сивлекен ҫын пачах та ҫук-тӑр,
Кӗр хӑй мулне кӗртет пая.

Таса тавралӑх, сывлӑш уҫӑ.
Ӗшеннӗ ҫӗршӗн — чӑн парне.
Тавралӑха сӑнать ман куҫӑм...
Юрлать чун, калӑн — ҫуркунне.

Хӑлат пек вӗҫет хӑват...
Вӑхӑт ҫех асран шӑвать:
Е Катрашка,
Е шуҫлак...
Е пӗремӗк,
Е патак...

Пурнӑҫ сикки —
Шыв сикки...
Вӑйна шайлаймарӑн —
Авӑра чӑмайрӑн...

Чӑн телей — ырӑлӑхран:
Чун пиллевӗ, ҫут тивлет...
Тӗмсӗлет ӳсен-тӑран,
Ҫӗр анне ӑна кӗтет.

Куллуна сапаласассӑн,
Йӗс шӑнкрав пек сассуна...
Ӑш ҫил вӗрӗ кассӑн-кассӑн
Тав туса сана, мана...

## Сана кăна савап

Хистет-çке юратмашкăн çуркунне,
Уçатăп яриех чӳречене —
Юрлаççĕ кайăксем çунат сарса,
Итлетĕп çав юрра чуна уçса.

Епле аван-çке пурнăç юратсан,
Хăв савнă çын та аллине парсан.
Лăпкаç хĕвелĕн ылтăн шевлисем,
Шĕпĕлтетеççĕ çирĕк çулçисем.

Вăраннă ыйхăран уйсем-хирсем...
Мăнаçлă Атăлра чупаç хумсем.
Çуркуннепе пĕрле юрлать чĕре,
Пĕрле пулма хистет часрах пире.

*Хушса юрламалли:*

Çав юрăра илтеп сан сассуна:
«Сана кăна савап, сана кăна.
Сана кăна савап, — янрать сассу. —
Сана кăна савап. Ан ман. Асту».

## Чĕресĕр вăл

Юратман вăл, юратман вăл,
Нихăçан та юратман вăл.
Савсах тунăччĕ тупа,
Халь вылять юратупа.

Чĕреме лăплантаратăп.
Юхтăр юрă — уçă кантăк.
Пĕлтĕр пĕтĕм çут тĕнче,
Кичем мар мана пĕччен.

Сывламастăп ассăн-ассăн.
Тек юратăва шанмастăп.
Уçрăм яриех куçа —
Çавăраймĕç тек пуçа.

*Хушса юрламалли:*

Чĕресĕр вăл, чĕресĕр вăл,
Чĕресĕр вăл, чунсăр вăл.
Савсах тунăччĕ тупа,
Халь вылять юратупа.

## Ĕмĕтсем

Куҫа хупнă-хупман
Ачалăх курăнать.
Ҫав ҫăтмах-юмахра
Ĕмĕтсем пурăнаҫ.

Паркаланчĕҫ вĕсем,
Тĕрекленчĕҫ вĕсем.
Иксĕлми уҫлăха
Вĕҫсе тухрĕҫ вĕсем.

Тĕл пулаҫҫĕ унта
Пĕр чух такăр ҫулсем.
Тĕл пулаҫҫĕ унта
Пĕр чух шакăр чулсем...

Ĕмĕтсем парăнмаҫ,
Чăнлăхран пăрăнмаҫ.
Пурнăҫа шĕкĕлчеҫ...
Ыррине ҫех кĕтеҫ.

*Хушса юрламалли:*

Ĕмĕтсем, ĕмĕтсем...
Чунри мăшăр ҫунат.
Чунри мăшăр ҫунат
Пурнăҫа ҫул хывать.

## Кантăрччĕ чĕрем

Шăнкрав курăкĕ ачашшăн
Ман çине пăхать.
Юрату çинчен манпа вăл
Шăппăн калаçать.
Кăкăртан сиксе тухать пуль
Канăçсăр чĕре.
Чун çунтармăш юратăвăм,
Ма çĕтсе çӳрен?
А-а-а, ма çĕтсе çӳрен?

Тен, эс пултăн янра юрă,
Пĕлĕтре вĕçен?
Тен, хĕвел шевлийĕ пултăн,
Ялкăшса çиçен.
Ман пĕлесчĕ, эс ăçта-ши?
Ма çĕтсе çӳрен?
Хăвăртрах салам ярсамччĕ,
Кантăрччĕ чĕрем.
А-а-а, кантăрччĕ чĕрем.

Çывăхрах эс. Эп туятăп.
Тĕмсĕлсе сăнан.
Чи илемлĕ чечексем эс
Ман валли пухан.
Ывăнмасăр эп кĕтетĕп
Çак хавас куна.
Хăвăртрах килсем, савниçĕм,
Лăплантар чуна.
А-а-а, лăплантар чуна.

## Юрату вальсĕ

Утатăп хавассăн
Çурхи сукмакпа.
Санпа тĕл пуласса
Сисеп чунăмпа.

Эп кĕтнĕ, эп шаннă,
Итленĕ чуна.
Ман чун çунатланнă
Кĕтсе çак куна.

Тавралăх илемлĕ.
Юрлаç кайăксем:
«Телейлĕ, телейлĕ
Кĕтме пĕлнисем».

*Хушса юрламалли:*

Шанни, ĕненни
Парать вăй-хăват.
Телейĕм çинчен
Чĕреçĕм юрлать.

Иртнине хăш чух аса илсен
Пурнăç урăм-сурăм çаврăнать...
Ылмашаççĕ ăмăртса çулсем,
Вăхăта пачах манаç вĕсем.

Пĕр-пĕрне çитсе пăраç çултан.
Ак — кайри малта, малти — кайра.
Пĕр кĕтмен çĕртен силлеç чуна...
Мĕншĕн-тĕр кĕтни килет сайра.

Туйăма кивçен илесчĕ
Хăш чухне çанталăкран.
Савăк юрă кĕвĕлесчĕ,
Вăл вĕçинччĕ уçлăхра...

Лăпкăлăх пур çутă кӳллĕн.
Пур кăралăх çут тӳпен.
Эп кĕтетĕп çĕрĕн-кунĕн
Пиллĕхне çут тĕнчерен...

Еплерех, еплерех тӳлек ирччӗ:
Кайӑксем саламлаҫ юрласа...
Пӗр самант пек ман кун вӗҫсе иртрӗ
Пӗр шеллевсӗр тӑман кӑларса...

Кӑмӑлне йӳле ячӗ ҫанталӑк...
Эпир иккӗн паян пӗр пекех.
Юррӑм пурччӗ чунтан савӑнмаллӑх...
Ҫилпе вӗҫрӗ. Килеймӗ текех.

Ӗнӗрлерӗм. Ҫук, эс илтеймерӗн.
Тен, ҫӗклес-и кӑштах сассӑма?
Ах, мӗн-ма ӗмӗлке пек ҫӳрерӗм
Пытарса тӑкӑнан туйӑма?!

## Пуҫа таяр хӗрарӑм умӗнче

Нумай-ши тав сӑмахӗ калакан
Хӗрарӑма ҫак тулӑх ҫӗр ҫинче?
Кам пур хӗрарӑм пек юратакан?
Кам пур хӗрарӑм пек каҫаракан?
Пуҫа таяр хӗрарӑм умӗнче.

Пуҫа таяр хӗрарӑм умӗнче.
Тав сӑмахне ҫине-ҫине калар.
Пулсан анне е арӑм юнашар —
Килет-ҫке пур ҫемьешӗн пархатар...
Пуҫа таяр хӗрарӑм умӗнче.

Пуҫа таяр хӗрарӑм умӗнче
Ачи-пӑчи, мӑнукӗ, тус-тӑван.
Хӗрарӑмӑн ӑш пилӗсӗр шӑнан,
Унпа кӑна пурне те эс чӑтан...
Пуҫа таяр хӗрарӑм умӗнче.

*Хушса юрламалли:*

Пуҫа таяр, пуҫа таяр,
Ӑш сӑмахсем ялан калар.
Анне, хӗрарӑм — пӗр тӗнче...
Пуҫа таяр ун умӗнче.

## Кирлĕ мар мана нумай

Кирлĕ мар мана нумай, кирлĕ мар.
Пул хутран-ситрен манпа юнашар,
Парнеле хутран-ситрен куллуна,
Ĕмĕр тытăп умăмра сан сăнна.

*Хушса юрламалли:*

Тĕл пултăмăр, тĕл пултăмăр
Хаваслă кун.
Çут ĕмĕтĕм, çут çăлтăрăм,
Пĕр station.

Пурнăçра эс пурри вăл — телей,
Пурăнас, юратассăм килет.
Сарăлса çĕкленеç çунатсем,
Çĕнелсе ешереç ман кунсем.

*Хушса юрламалли:*

Кирлĕ мар мана нумай, кирлĕ мар.
Тĕксĕм кунăмра пулсамччĕ хунар.
Ăшшуна эп туям чунăмпа,
Ун чух тулĕ пурнăçăм хăватпа.

*Хушса юрламалли.*

Кăшкăрса ирсĕре хăратаймăн.
Кăшкăрса çĕнме çук хураха.
Янратать юррине шăпчăк шăппăн —
Пурпĕрех саланать улăха...

Сассăм манăн янравлă та мар-тăр,
Пурпĕрех-çке юрлассăм килет.
Юрăри чун-чĕренĕн кăварĕ
Тен, çитерĕ ман сиплĕ пиле.

Ачара вăратсанччĕ чăвашлăх,
Аслисем упрасанччĕ ăна.
Çавăнтан килĕ хал пурăнмалăх,
Пуянлатĕ чуна, ăс-тăна...

## Вăрттăнлăх

«Вăрттăнлăх ку», — терĕн эсĕ.
Шанăç куçунта. Шанах.
Йывăр пурнăç — ун хĕресĕ,
Итлесе шăнап, шăнап...

Мĕн чуль вăрттăнлăх кĕмен-ши
Ман хавшанă чĕрене?..
Кампала пĕрле йĕмен-ши,
Шеллемен-ши вĕсене?

Чунăм ыратать пулин те,
Çăраланă çăвара...
Пур-çке вăрттăнлăх пурин те.
Пурнăç — шеллеми кăра...

Пурнăç тăрăх питĕ йывăр
Çĕклеме йăтса утма...
Ӳкерсессĕн — юлĕ хывăх,
Хывĕ вăрттăнлăх сукмак...

«Вăрттăнлăх», — теетпĕр эпĕр,
Турă пурпĕрех пĕлет.
Пурнăçра пулать тем те пĕр,
Ак каллех юлташ килет...

## Çул çинче

Шăтăр-шатăр! Чăх та чах!
Халăх кĕрлет: ах та ах!..
Кам вăрçăнать, кам кулать...
Ӳсĕр вырăс кăшкăрать:
«Ёкорный бабай — маршрутка!
Это вам совсем не шутка!»

Аякне пĕрмай тытать,
«Амăшне» шав асăнать...
Кинеми шăлать куçне,
«Апа-пап», — тытать пуçне.
Калаçатчĕç шăкăл-шăкăл...
Пуç çинче халь пысăк мăкăль.

Ăмăртаç «çул хуçисем»,
Пуçтараç укçа вĕсем.

Лăпкă ир, çут хĕвел, янкăр кун.
Кун пек чух ыррине çех куратăп,
Тунсăха сирсе ячĕ ман чун,
Эп телей çăмхине чăмăртатăп...

Ах! Хăрап вĕçертме алăран.
Вĕçертсен ăçталла кусса кайĕ?
Тĕмсĕлӳ, кĕвĕçӳ — хуралра...
Пурнăçа савнинче пур-ши айăп?..

Çĕр çинче этеме вырăн пур.
Пулăшать хăш чухне чун шыравĕ...
Хывăхра тутă тĕшĕ те пур,
Пултăр вăл чăн телейĕн управĕ.

Çул чупать инçе, инçе...
Çĕрпе пĕлĕт хушшине...
Пĕр — сарлака, пĕр — çинçе.
Эп çаклантăм юппине...

Эп утасшăн хăвăртрах,
Хам сывлатăп ах та ах!
Чăтлăх икĕ енĕпе...
«Чăт, — тет пурнăç, — майĕпен
Чăтлăха сирсе тухан,
Çутă уçлăха куран...

Йывăр пурнăç кутамкки?
Йĕри-тавра сан пекки...»

Аманнă вĕçен кайăк пек,
Хăрах уран тăран...
Ăмăрт кайăклăх çук-ши тек?
Ма пурнăçран хăран?

Каçпа вĕçсе тухан сăмах
Хăш чух ӳкет çĕре...
Ирпе шутласчĕ сан. Чăнах.
Ирпе ăс тимлĕрех...

Пуç çаврăнать-и шухăшпа?
Эрех вăл — эмел мар.
Пĕр Турăран килмест шăпа.
Ăш пиллĕх — юнашар...

Туйса илсессĕн çак ăшша
Ак сарăлĕ çунат.
Хывсам çак пиллĕхе ăша,
Çутаттăр вăл çулна...

Ах, Çӗр анне, епле чӑтан?!
Пӗр шелсӗр кӑкӑрна таптаççӗ.
Хирсем те вӑрмансем çунаççӗ...
Ах, Çӗр анне, епле чӑтан?!

Ах, Çӗр анне, епле чӑтан?!
Сенкер тӳпе те хӑрӑмланчӗ,
Тинӗсӳсем юнпа варланчӗç...
Ах, Çӗр анне, епле чӑтан?!

Ах, Çӗр анне, епле чӑтан?!
Çак ирсӗрлӗх — сан ывӑл-хӗрӗн...
Çавах ӑна эс каçаран,
Çавах ӑна эс пил паран.

Паратӑн шанӑç...

## Хама

Юрать пуль çӗр çине ансан та,
Çитет пуль тӳпере вӗçме.
Тăхăнса яр калуш е атӑ,
Пуçла ял пылчăкне виçме...

Эс çаннуна хастаррăн тавăр.
Çут çавине туптать тăван.
Вăранмалла.
Самант халь — талăк.
Кайран çулталăк тав тăван.

Йӑлтах иртет, йӑлтах иртет...
Юлать-çке пурпӗрех çут шанӑç.
Вӑл çӗнелсе килет ирпе.
Çӗклемӗнче — тивлет те канӑç...

Çак канӑç кирлӗ-ши мана?
Ман пурнӑçӑм шырав тӗнчийӗ.
Чун канӑçӗ — хӑна кӑна,
Шырав, шырав ман чун элчийӗ.

Пĕчĕк парашютăм, юр пĕрчийĕ,
Мĕншĕн питĕ хăвăрт ирĕлен?
Мĕн каласшăн эсĕ, хĕл элчийĕ,
Вăрăм хĕл çинчен эс мĕн пĕлен?

Хăй ĕçне вăл вăхăтра ĕçлет-и,
Тен, кăтартĕ кăшт каварлăхне,
Сапĕ-и юрне пĕр шеллемесĕр?
Чĕнĕ çавăнтах, тен, çумăрне?
Çырмана çут тĕкĕр парнелет-и
Тепĕр кун ăна илме туртса?
Е часах хуçаланса килет-и
Пур çĕре те шурă пир сарса?..

## Икĕпитлĕх

Куçран пăхса мухтать ĕçтешĕ
Хăй ĕçтешне.
Сим пыл юхать...
Хĕвел шевли тăкмасть-çке лешĕ,
Тĕтреллĕ куçĕпе пăхать...

Пуçне пĕкет ав итлекенĕ,
Чĕтрет, чĕтрет çӳхе тути.
Миçе хутчен ĕçтешĕ пенĕ
Чулпа ăна.
Ах, армути!

Хăв чунунта йӳçек пулсассăн
Ăшна кантармĕ чĕрĕ шыв...
Ак эпĕ те сывлатăп ассăн —
Хыçран тапать ку çаврăнсассăн...

## Çум çакки

Çум çакки пекех çӳрет-çке
Кӳршĕ ял каччи çумра.
Куççульпех хăш чух йĕрет-çке:
— Вут çунать, — тет, — чунăмра.

Хуйхăпа, тен, маннă пулĕ
Çум çакки хăй арçынне.
Уншăн — хуйхă, маншăн — кулă.
Веçех илчĕ тинкене.

Ма мăнаçлăх пĕртте çук-ши
Çакă каччă тенинче?
Кĕтсе илчĕ вăл ак çупкă
Юратушăн пĕринче.

Чĕрĕлчĕ ак самантрах вăл
Иксĕлми юратуран.
Çум çакки мана пăрахрĕ,
Тин вăл хăпрĕ çумăмран.

Пĕр-пĕччен киле утатăп...
Асăмрах ман Çум çакки.
Каярах, чăнах калатăп,
Тупăнмарĕ ун пекки.

Ыйхăран вăрансассăн тăнла:
Шухă çил кантăкран тан! шаккать-и —
Эпĕ вăл. Пĕр йĕреп, пĕр кулап.
Ĕçлесе ывăнсассăн тăнла:
Çепĕç çемĕ чунна ăшăтать-и —
Эпĕ вăл. Каллех тухрăм çула.

Чунна тăвăр пулсассăн
тăнла:
Майĕпен сĕртĕнсе хум килет-и —
Çумăнтах эп хĕлле те çулла...

Шухăшларăн, шухăшларăн,
Тем те шутласа кăлартăн.
Пур çынран кĕтетĕн парăм:
Парăмра юлташ та арăм...

Сум кĕтетĕн, чап кĕтетĕн,
Хăв пĕрмай таçта вĕçетĕн...
Мухтанан,
хăлаçланан,
Çăхан евĕр пăхкалан.

Янратан пуш параппан,
Хăв шутлатăн — чан çапан:
«Ăна лекнĕ нумайрах,
Мана лекнĕ сахалрах».

Ытамне сарать ав уçлăх...
«Эх! — шутлан, —
пуласчĕ пуçлăх...»

Аса килен ăна курсассăн,
Сана курсассăн — вăл асра.
Пĕрпеклĕх: утă, кулă, сасă...
Çак пурте килнĕ Турăран.

Çут тĕнчере калаççĕ виççĕ
Пĕр евĕр çын. Çаплах-и, тен?..
Анчах пĕри чунпа — вут-çиçĕм...
Тепри — чĕр шыв. Тепри — пиçен...

Пĕрремĕш юр çĕре шуратрĕ.
Епле сăпайлă хĕл элчи:
Пĕр сассăр ыйхăран вăратрĕ
Ват Хĕл Мучин хастар ачи.

Хăй пăшăлтатрĕ ăшă çил пек:
— Эс ан кулян эп ирĕлсен.
Хĕрĕх кунтан каллех ак çитĕп
Çĕре шур кавирпе витсе.

Вун пĕрте, вун иккĕре
Алăра сăра курки —
Пирĕн пурăнăç йĕрки.
Курнипех çунать чĕре.

Тӳресем закон çыраççĕ:
«Эрех-сăрана — çул хупă».
Закон мар кирли — чĕр хулă,
Законсем çине сураççĕ.

Ĕçлесен — закон аван,
Вăл йĕркешĕн — Атте Турă.
Мĕн куратпăр-ха паян?! —
Халăхпа мĕскер вăл турĕ?!

Эрехре — çĕршыв бюджечĕ,
Çăкăршăн — чулпа вăл печĕ...

*Анатолий Юмана*

Йӗвенленӗ Эсир Пегаса,
Шикленмесӗр, хӑюллӑн утланнӑ,
Сӗллине хурса панӑ саппас,
Ҫавӑнпа вӑл аван ӑратланнӑ...

Ҫул памасӑр тӑман никама,
Юнашар та лартса ярӑнтарнӑ.
Ҫавӑнпа такӑнман урхамах,
Тав Турра! Сирӗнпе тӗл пултарнӑ.

Савӑнтарӑр тӑван халӑха,
Сӑввӑрсем, юррӑрсем янӑраччӑр.
Ватӑлатпӑр тени кӑлӑхах —
Иксӗлмест Сирте Турӑ хӑвачӗ.

*Асамата*

Светлана — çутăскер — ят панă,
Мерчен пек ялтăратăн эс.
Эс çуттуна çынпа пайланă.
Çутă тĕнче çакна хакланă,
Мĕн чухлĕ пултарулăх панă!
Пӳрне хуçсан — пӳрне çитмест.

Чăвашăн сумĕ, ячĕ, чапĕ...
Санра — асамлăх, Асамат.
Эсех чăвашлăхăн чăн чанĕ —
Тĕнчипеле сассу янрать.

Сим пылпала чей ĕçтеретĕн,
Тĕрлĕ çырла сĕткенĕпе.
Чун ăшшине пĕрмай сĕнетĕн
Асамлă çемĕ майĕпе.

Çутат, Светлана, çутăскер,
Пур çутатмалăх сан еткер.

*Валерьян Ромашкина,*
*«Канаш» хаçат редакторĕ пулнăскере*

Эпир шăватпăр пурнăç шунă май
Хăш чух чупас килсен те сиккипе.
Çак аслă çĕр çинче этем нумай,
Чăн çынсене шутлайăн пӳрнепе.

Чăн çынсене шутлайăн пӳрнепе,
Шăп çав шутра эс, Валерьян Ромашкин.
Ĕçлетĕн, çырлахмастăн пуррипе:
Мелсем шыратăн хăв лавна туртмашкăн...

Пĕр чарăнми шыратăн эс мелсем,
Чĕнетĕн чăваша малтан мала.
«Канаш» тавра пĕрлешрĕç поэтсем.
Сан умăнта пуçа çех таймалла...

Ут малалла, мал шухăшлă редактор.
Чăн-чăн чăваш.
Апла эс — чăн-чăн паттăр.

*Раиса Сарпие*

Эс ирӗлместӗн, ирӗлместӗн.
Унанӑ хытӑ чустаран.
Ҫулпа хытатӑн, ҫемҫелместӗн,
Хӑш чух ӳксен те ураран.

Ҫынна шанатӑн — тӗрӗслетӗн,
Чунна паратӑн чӑн ҫынна.
Кам такӑнать — пырса ҫӗклетӗн,
Тӗксе ямастӑн тӑшмана.

Ялан шыратӑн, вӗрентетӗн,
Ӑша хыватӑн ҫын ӗҫне.
Сан тӗллевӳ — ҫӗклентӗр несӗл,
Ан юлтӑр вӑл юлхав хыҫне.

*Анатолий Ырьята*

Чĕмпĕрти питĕ сумлă çыравçă,
Калаву-повеçӳ — чун ăшши.
Нихăçан та пулман эс хăравçă,
Шыравра вĕт çак пурнăç тĕшши.

«Канаша» кунсерен чун кĕртетĕн,
Чĕрĕлсе тăчĕ «Атăл юрри».
Эс ача пек чунтан хĕпĕртетĕн
Йăл кулсассăн поэзи Турри.

Мĕн тесен те иртмест ĕмĕр тикĕс,
Çул çинче пур тумхах, шакăр чул.
Ыр ята чăннипех те эс тивĕç,
Анатолий Ырьят,
ĕмĕр пул!

*Серте Мишшине*

Ӗлӗкрех серте нумай ҫисеччӗ —
Ҫуркуннен сӗтеклӗ курӑкне.
Тен, серте поэт туса ӳстерчӗ?
Эп унрах куратӑп тупсӑмне.

Эсӗ те иккен унпа тус пулнӑ —
Ӳссе ҫитрӗн халь ҫӳлти шая.
Сертепех пуль ҫыхӑннӑ ҫак пулӑм,
Сӗткенне вӑл панӑ самаях.

Сан пекех эп витӗмлӗ ҫырман та,
Тӑрӑшатӑп танлашма, Серте.
Чунсенче поэзи хуҫалантӑр,
Юрламашкӑн пур хӑват пирте.

*Николай Ларионова,*
*«Шевле» литпӗрлешӳ ертӳҫине*

«Шевле» ҫутипе ял-л ҫутатрӑн
Эс Чӗмпӗр ҫӗрне, Микулай.
Нумай таланта ҫул кӑтартрӑн,
Ӗҫлетӗн, шыратӑн пӗрмай...

Мухтатӑн, анчах мухтанмастӑн,
Ӑш туйӑм вылять сан чунра.
Шывра, Микулай, эс путмастӑн,
Ҫунмастӑн, тӑванӑм, вутра.

Ялан пӗлӗвне эс туптатӑн,
Шанатӑп: пулатӑн маяк.
Пиллетӗп: ҫулу пултӑр такӑр,
Истори сана парӗ хак.

*Иринăна*

Пĕр чухне эс —
сивĕ шыв...
Пĕр чухне эс —
вутлă çиçĕм...
Ман пиле
ăша эс хыв:
Чунупа таса
пул вĕçĕм.

Сиреен
кирлĕ мара,
Çĕнтеретĕн
тип шара...
Хăвшăн ху эс —
чăн хурал.
Ялан ялкăш,
Ан хурал!

Ăнсăртран, ăнсăртран мар-и? —
Тĕлпулу çине-çине...
Юнашар, юнашар мар-и...
Пĕл ман чун юрланине.

Шанăçпа пурнатăп эпĕ
Чунăма пуянлатса.
Кăмăл — ырă, сассăм — çепĕç.
Туйăм шур юр пек таса.

Сĕртĕнетĕп, сĕртĕнетĕп
Туйăмпа чун хĕлĕхне.
Туйăмпа пурнатăп эпĕ
Шăратса сӳрĕклĕхне...

Тӗлӗнмелле, тӗлӗнмелле.
Те кулмалла, те йӗмелле,
Тен, чӗрене итлемелле? —
Çилпе, çилпе вӗçтермелле...

Элек сӑмах...
Шуçлак сукмак...
Пуçран тӳнккесшӗн-им тукмак?
Хапха çӑвар —
Çӑва патне!
Чуна çӑвам,
Ытти — ӳпне...

## Ăс-хакăл

Ăс-хакăл хаклăрах-çке ылтăнран,
Çут чăнлăх çап-çутах-çке хĕвел пек.
...Пĕри, кăкăр çапсах ав ăс парать,
Тăкать тепри тар кунĕ-кунĕпех.

Ĕçре тарлаканни çине пăхсан
Ума тухать туп-тулăх кĕреке.
Çав тарпала виçетĕп эп ăса,
Çав ĕçченре куратăп тĕреке.

Тӳр кăмăл хаклăрах-çке ылтăнран,
Хакланă чух эп «ылтăнăм» теместĕп.
Çут чăнлăха упрап ăсра, чунра,
Тен, çавăнпа-и — пĕртте кĕвĕçместĕп.

## Сĕмсĕр çын

Эх тăкать вăл сăмахне,
Итлесе шăнатăп.
Усала Тур сирессе
Эп чунтан шанатăп.

Сĕмсĕр, путсĕр умĕнче
Ал-ура ман — лĕнчĕр.
Хуралать куç-пуç, тĕнче,
Пÿлĕм — тăвăр, пĕчĕк...

Ак хама илсе алла
Ăшра йăл кулатăп:
«Алапа веçех алла
Хывăх вĕçсе кайтăр.

Алара мĕскер юлни
Пурнăçра ăс патăр.
Çынсене ырă туни
Пултăр ман хăватăм».

## Хĕвел

Пытанмалла вылять-им вăл манпа:
Пĕр йăл-л кулать, пĕр çухалать самантлăх.
Ыр кун пилленĕ пекчĕ халь кăна,
Кунпа пĕрле ман чун та ăмăрланчĕ.

Хĕвел çухалчĕ, сӳнчĕç ĕмĕтсем,
Çав сар хевел пекех вĕсем тасаччĕ,
Çунат саратчĕç çак куна кĕтсе,
Çĕкленчĕç те — тĕтрелĕхре пытанчĕç.

Ах, сар хĕвелĕм, тух тĕтрелĕхрен,
Ĕмĕтĕмсен çулне çутат хавассăн.
Ман чун хевтийĕ пирĕн пĕрлĕхре.
Çутат. Йăл кулăп та сывламăп ассăн...

## Тупмалли

*Шăнкăртатать çăлкуç* . . . . . . . . . . 3

**Сенкер инçет**

«Чун-чĕре туртать...» . . . . . . . . . . 8
Хам çулпах . . . . . . . . . . 9
«Турăран мĕн ыйтни йăлт пулсассăн...» . . . . 10
«Эп сăвăç кăна мар...» . . . . . . . . . 11
Асаилӳ . . . . . . . . . . 12
«Камран-ши çут хĕвел именчĕ?..» . . . . . . 13
Эп шутлатăп... . . . . . . . . . . 14
Чирленĕ вăхăтра . . . . . . . . . . 15
«Çил пек вĕçетĕп пур çĕрте...» . . . . . . . 16
«Чарăнми шĕпĕлтетеççĕ...» . . . . . . . . 17
Сутмĕ никама . . . . . . . . . . 18
«Çурхи куна мĕскер çитет?..» . . . . . . . 19
«Хур кайăксем кăнтăралла хускалчĕç...» . . . . 20
Канлĕх . . . . . . . . . . 21
Шанăр . . . . . . . . . . 22
«Чечек курсассăн...» . . . . . . . . . 23
«Танлаштартăм çăлтăрпа...» . . . . . . . 24
«Таçта çĕтсе çӳренĕ пуль çулсем...» . . . . . 25
Ниме тăман сăмах . . . . . . . . . 26
«Çаврăнать çавра çил...» . . . . . . . . 27
Ахрăм . . . . . . . . . . 28
«Çаралчĕ эп савнă çаран...» . . . . . . . 29
«Хăш чухне эп ют çынна шанатăп...» . . . . . 30
«Сана та, ăна та, мана та...» . . . . . . . 31
Çывăх — çылăх . . . . . . . . . 32
«Пĕр чух мана эс кĕлчечек сĕнетĕн...» . . . . . 33
«Пурнăç — пыл та çу...» . . . . . . . . 34

«Утăн-и эс, чупăн-и?..» . . . . . . . . . . . . 35
«Ĕнер кăна çиçеттĕр кулăпа...» . . . . . . . . 36
«Çакăнта эп сана тĕл пулсаччĕ...» . . . . . . . 37
«Сирĕн анăр çине эп пусманччĕ...» . . . . . . . 38
Пиçен çыххи . . . . . . . . . . . . . . . . 39
«Эс ăна манайсан...» . . . . . . . . . . . . 40
«Тĕл пултăмăр...» . . . . . . . . . . . . . . 41
«Шур юр çинче ав мăшăр йĕр...» . . . . . . . 42
Виç пуспа . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Пăван . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44

**Чун тараси**

«Ах, пурăнăç! Ах, пурăнăç!..» . . . . . . . . . 46
«Ăс-тăна илеймĕн укçалла...» . . . . . . . . . 47
«Кама савса юрлан, сар кайăк?..» . . . . . . . 48
«Тӳпе те йăлтăркка паян...» . . . . . . . . . 49
«Кам мĕнле ăнланать илеме...» . . . . . . . . 50
«Йĕпписем йăл-ял выляççĕ...» . . . . . . . . 51
«Юратаймăн çыншăн, юратаймăн...» . . . . . 52
«Шурă, шурă хут листи...» . . . . . . . . . . 53
«Эп вут çине пусасшăн марччĕ...» . . . . . . 54
«Ыраш аксан — вырса илеймĕн тулă...» . . . . —
«Юлашки хут йăл кулчĕ...» . . . . . . . . . 55
«Ӳтне витермеллех...» . . . . . . . . . . . . 56
«Тус-тантăш хапăл тунă ачаран...» . . . . . . 57
«Çăтрăм ятăм янăрас кулла...» . . . . . . . . 58
«Пурте хĕрарăмран çуралнă...» . . . . . . . . 59
«Ирпелен хĕвел савса пăхсассăн...» . . . . . . 60
«Шыв вăл — укçа...» . . . . . . . . . . . . 61
«Пурăнатпăр...» . . . . . . . . . . . . . . . 62
«Курнине куçăмпа...» . . . . . . . . . . . . 63
Ваттисен çуртĕнче . . . . . . . . . . . . . 64
«Юр пĕрчисем ӳкеççĕ ман çине...» . . . . . . 65
«Ывăтса яр, ывăтса...» . . . . . . . . . . . —
«Кĕрлет самана, эй, кĕрлет...» . . . . . . . . 66
«Ылтăнпала ылтăн ылмашаççĕ...» . . . . . . . 67
«Анваскат вăхăта, ан васкат...» . . . . . . . 68
Чун ыратать . . . . . . . . . . . . . . . . 69

«Çут тӗнчене хӑв ытамна илеймӗн...» . . . . . 70
«Мӗнрен илетӗп эп вӑй-хал?..» . . . . . . . . 71
«Çиçет çут çӑлтӑрла куçу...» . . . . . . . . . 72
«Ах, самана!..» . . . . . . . . . . . . . . . . 73
«Ыр сӑн-сӑпатлӑ кӗреке...» . . . . . . . . . . 74
«Чунран юрӑ шӑранса тухсан...» . . . . . . . —
«Ӑспа пурнатпӑр-ши эпир?..» . . . . . . . . . 75
«Мӗнех вара? Мӗнех!..» . . . . . . . . . . . 76
Чечняра — вӑрçӑ . . . . . . . . . . . . . . . 77
«...Хӗвел тухӑç енне тӗмсӗлсе тинкеретӗп...» . 78
«Курас марччӗ ман куç...» . . . . . . . . . . 79
«Тӗлӗкӗм ман — пӗлӗмçӗ...» . . . . . . . . . 80
«Чуна хавас...» . . . . . . . . . . . . . . . . 81
«Çаврака çӗр чӑмӑрӗ...» . . . . . . . . . . . 82
Телей . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 83
«Чуна хӗсет шӑв-шав...» . . . . . . . . . . . 84
«Эс хальхи модӑпа пурӑнсассӑн...» . . . . . . 85
«Шансан та, шанмасан та...» . . . . . . . . . 86
«Шав тӑвалла утсан та...» . . . . . . . . . . —
Афродита . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 87
«Мӗншӗн эпӗ пысӑк айӑпра?..» . . . . . . . . 88
«Çӳп-çӳхе те черчен çамрӑк хулӑ...» . . . . . . 89
«Çӗкленӳ малалла çул хывать...» . . . . . . . —
«Çунатлӑ кайӑксем чӗнеççӗ...» . . . . . . . . 90
Шурӑ хурӑн . . . . . . . . . . . . . . . . . 91
Эп телейлӗ эс ӑшшӑн кулсан . . . . . . . . 92
Тӗлпулу . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 93
«Хаeasy пӗр-пӗрне эпир сӑнатпӑр...» . . . . . . . 94
«Пулать иккен çапла та пурнӑçра...» . . . . . 95
Чӑлах сӑмахсем . . . . . . . . . . . . . . . 96
«Епле тупас-ши кӑмӑлна?..» . . . . . . . . . 97
«Эс каланӑ, эпӗ илтнӗ...» . . . . . . . . . . 98
«Çӗр шыва-çке савать...» . . . . . . . . . . . 99
«Пӗчӗкскер. Чӑмӑр пысӑкӑш çех те...» . . . . 100
Тӑван çӗршывӑм, телейлӗ пурӑн . . . . . . 101
«Шухӑшламасӑр калаçни...» . . . . . . . . . 102
«Ыратусӑр пулмасть çухату...» . . . . . . . . —
«Кӗркунне, епле ачаш пулсан та...» . . . . . . 103

«Шăпа пиртен нумай хут аслă...» . . . . . . . 103
«Эп самаях пĕлетĕп çав сана...» . . . . . . . —
«Тĕксĕм каçа çивĕч туййăм...» . . . . . . . 104
«Чечек парнелеменшĕн каçаратăп...» . . . . . 105
«Çăвара уçма ансатчĕ...» . . . . . . . . . 106
«Ан шыра илемлĕ сăмахсем...» . . . . . . . 107
«Тăвар тăкса ятăм...» . . . . . . . . . . 108
«Мĕн-ма сана ятламалла...» . . . . . . . . 109
«Юрла, шухă çил, эс юрла...» . . . . . . . 110
«Çулçăсем ӳкеççĕ ман ума...» . . . . . . . 111
«Юхать, юхать, юхать-çке çемĕ...» . . . . . 112
«Мĕн-ма шаккатăн кантăкран...» . . . . . . 113
«Эп санпа тĕлпулу шыраман...» . . . . . . . 114
«Ют пахчана кĕрсе улма татмастăп...» . . . . 115
«Каллех ав çут тĕнче вăраннă...» . . . . . . 116
«Чăрмантармăп тек...» . . . . . . . . . . 117
Сасă . . . . . . . . . . . . . . . 118
«Пулман нимех те пирĕн хушăра...» . . . . . 119
«...Ыйту — чăрмав...» . . . . . . . . . . 120
«Кавир тĕртесшĕн эп чечексенчен...» . . . . . 121
Сăмах . . . . . . . . . . . . . . . 122
«Тĕлленмен те...» . . . . . . . . . . . 123
Калаçу . . . . . . . . . . . . . . . 124
«Ăшах та мар...» . . . . . . . . . . . 125
«Çынна кӳрентерме нумай-и кирлĕ?!.» . . . . 126
«Ыр хыпара илтме те ырă...» . . . . . . . 127
«Ман пĕр çĕршыв...» . . . . . . . . . . 128
Пĕртăвансене . . . . . . . . . . . . 129
Шӳтлесе . . . . . . . . . . . . . . 130
«Ир-ирех пуçтартăм вырăна...» . . . . . . . 131
«Инçе çула паян тухатăп...» . . . . . . . . 132
«Çунашкана вăйпах туртатăп...» . . . . . . 133
Мăшăрăма . . . . . . . . . . . . . 134
«Арçын тытса пырать хушамата...» . . . . . . 135
Яла кайма тухсан . . . . . . . . . . . 136
Туссене . . . . . . . . . . . . . . 137
Тăван ялăма . . . . . . . . . . . . 138
Çуралнă кун . . . . . . . . . . . . 139

«Асамлă юрăсен хăвачĕ...» . . . . . . . . 140
Сад чечекре . . . . . . . . . . . . . . . . 141
Аннене . . . . . . . . . . . . . . . . . . 142
Ачалăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . 143
Салам сире . . . . . . . . . . . . . . . . 144
Асаннене . . . . . . . . . . . . . . . . . 145
Ывăлăма . . . . . . . . . . . . . . . . . 146
«Сансăр тунсăх мана, тăван ял...» . . . . . . 147
Аттене асăнса . . . . . . . . . . . . . . . 148
«Пĕр анне пире çуратнă...» . . . . . . . . . 149
Çемье . . . . . . . . . . . . . . . . . . 150

**Ĕмĕтсем**

Каламан . . . . . . . . . . . . . . . . . 152
«Уй-хир урлă каçрăм та...» . . . . . . . . . 153
«Турă панă пĕр пуç...» . . . . . . . . . . . —
«Çиччĕ виçрĕм...» . . . . . . . . . . . . . —
«Çутăлать — куç хупмасăрах...» . . . . . . . 154
«Мĕн-ма кĕретĕн тĕлĕке?..» . . . . . . . . . 155
Çерем çинче çырла çисе çӳрерĕм . . . . . . 156
«Санпа манра пĕрпеклĕх çук...» . . . . . . . 157
«Ылтăн çулçă ман ума ӳксессĕн...» . . . . . . —
«Çавăн пекех çуркунне те...» . . . . . . . . 158
«Лӳшкет, лӳшкет-çке кĕрхи çумăр...» . . . . 159
«Хăлат пек вĕçет хăват...» . . . . . . . . . 160
«Пурнăç сикки...» . . . . . . . . . . . . . —
«Чăн телей — ырăлăхран...» . . . . . . . . . 161
Сана кăна савап . . . . . . . . . . . . . . 162
Чĕресĕр вăл . . . . . . . . . . . . . . . . 163
Ĕмĕтсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 164
Кантăрччĕ чĕрем . . . . . . . . . . . . . . 165
Юрату вальсĕ . . . . . . . . . . . . . . . 166
«Иртнине хăш чух аса илсен...» . . . . . . . 167
«Туйăма кивçен илесчĕ...» . . . . . . . . . 168
«Еплерех, еплерех тӳлек ирччĕ...» . . . . . . 169
Пуçа таяр хĕрарăм умĕнче . . . . . . . . . 170
Кирлĕ мар мана нумай . . . . . . . . . . . 171
«Кăшкăрса ирсĕре хăратаймăн...» . . . . . . 172

Ăрттăнлăх . . . . . . . . . . . . . . . . . 173
Çул çинче . . . . . . . . . . . . . . . . 174
«Лăпкă ир, çут хĕвел, янкăр кун...» . . . . . . 175
«Çул чупать инçе, инçе...» . . . . . . . . 176
«Аманнă вĕçен кайăк пек...» . . . . . . . . 177
«Ах, Çĕр анне, епле чăтан?!.» . . . . . . . . 178
Хама . . . . . . . . . . . . . . . . . 179
«Йăлтах иртет, йăлтах иртет...» . . . . . . . 180
«Пĕчĕк парашютăм, юр пĕрчийĕ...» . . . . . . 181
Икĕпитлĕх . . . . . . . . . . . . . . . 182
Çум çакки . . . . . . . . . . . . . . . 183
«Ыйхăран вăрансассăн тăнла...» . . . . . . 184
«Шухăшларăн, шухăшларăн...» . . . . . . . 185
«Аса килен ăна курсассăн...» . . . . . . . . 186
«Пĕрремĕш юр çĕре шуратрĕ...» . . . . . . 187
«Вун пĕрте, вун иккĕре...» . . . . . . . . . 188
«Йĕвенленĕ Эсир Пегаса...» . . . . . . . . 189
«Светлана — çутăскер — ят панă...» . . . . . 190
«Эпир шăватпăр пурнăç шунă май...» . . . . 191
«Эс ирĕлместĕн, ирĕлместĕн...» . . . . . . . 192
«Чĕмпĕрти питĕ сумлă çыравçă...» . . . . . 193
«Ĕлĕкрех серте нумай çисеччĕ...» . . . . . . 194
«Шевле» çутипе ял-л çутатрăн...» . . . . . . 195
«Пĕр чухне эс...» . . . . . . . . . . . . 196
«Ăнсăртран, ăнсăртран мар-и?..» . . . . . . 197
«Тĕлĕнмелле, тĕлĕнмелле...» . . . . . . . . 198
Ăс-хакăл . . . . . . . . . . . . . . . . 199
Сĕмсĕр çын . . . . . . . . . . . . . . . 200
Хĕвел . . . . . . . . . . . . . . . . . 201

*Литературно-художественное издание*

**Валентина Тарават**
**(Игнатьева Валентина Николаевна)**

**ЁМЁТСЕМ**

**МЕЧТЫ**

**Стихи**

*На чувашском языке*

Редактор *Г.А. Антонова*
Художник *М.Л. Егорова*
Художественный редактор *С.А. Бритвина*
Технические редакторы *Л.К. Егорова, Е.Е. Фомина*
Корректоры *З.И. Гаврилова,*
*Н.В. Вечеркина, А.Ю. Николаева, Н.Г. Орлова*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции
ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 20.02.12. Формат
70x90 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс.
Печать офсетная. Усл. печ. л. 7,61. Учетно-изд. л. 4,29.
Тираж 500 экз. Заказ № К-7916. Изд. № 7.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

80,00



**Валентина Тарават —** вулаканшăн паллă ят. Вăл — «Хура хăлха», «Хаклă сасă», «Чун тараси», «Тавçăруллă Марине», «Поскорее подрастай. Ӳссе çитĕн хăвăртрах», «Кил ăшши», «Мне с надеждой повезло», «С днем рождения» тата ытти кĕнекесен авторĕ. Сăвă-калав çырнисĕр пуçне юрăсем те кĕвĕлет. Вĕсем халăх хушшинче анлă сарăлнă.